чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ХЫПАР

"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

143 /26549/№ Кĕçнерни кун, 2014, утă (июль), 24 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

УЭК

Общество транспорчĕпе çÿренĕшĕн

Чăваш Енре пурăнакансем кăçал пĕрремĕш çур çулта общество транспорчĕпе çÿренĕшĕн универсал электрон карттăпа /УЭК/ усă курса 17974 хут тÿленĕ. Вăтамран уйăхра çул çÿренĕшĕн УЭКпа 3 пин ытла хут тÿлеççĕ. Карттăпа çак тĕллевпе кăрлач уйăхĕнче чи сахалли усă курнă – 2333 хут, чи нумаййи – пуш уйăхĕнче /3460 хут/. Çакнашкал кăтартусемпе паллаштарать "Пĕрлехи транспорт картти" ООО.

Паянхи кун пассажирсем Çĕнĕ Шупашкарти маршрут таксийĕсене /11, 12, 14, 15, 20, 20к №-лисене/, Шупашкарти 30, 33, 42, 44, 46 №-лĕ тата хула çумĕнчи 626, 265.1, 511э, 112, 555, 536 №-лĕ "маршруткăсене" ларса кайнăшăн транспорт карттипе е УЭКпа тÿлеме пултараççĕ. Унсăр пуçне УЭКпа Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар троллейбусĕсенче тата "Чăвашавтотрансăн" пассажир транспортĕнче усă курма пулать.

Çул çÿренĕшĕн тÿлес тесен карттăна ятарлă терминал çине çеç хумалла. Çав хатĕр чек парать, унта çул çÿрев хакне, вăхăта тата датăна, маршрут номерне, харпăр счетра мĕн чухлĕ укçа юлнине кăтартнă. Общество транспортĕнче электрон мелпе тÿлекенсем пĕр тенкĕ сахалрах тăкакланаççĕ, хула çумĕнчи транспортра – кашни километршăн 30 пус йÿнĕрех.

Аса илтеретпĕр: Чăваш Енре, Раççейри пекех, УЭК илесси пирки çырнă заявленисене 2013 çулхи кăрлач уйăхĕн 9-мĕшĕнче йышăнма пуçланă. Карттă кирли е кирлĕ марри пирки çырнă заявление 12 пунктра пама юрать. Вĕсем Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Канаш, Улатăр, Çĕмĕрле хулисенче тата Муркашпа Шупашкар районĕсенче вырнаçнă.

Универсал электрон карттăсем Чăваш Ене федераци хушăмĕсемпе /идентификаци, банк, СНИЛС, ОМС/ килеççĕ. 2013 çулхи ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен карттă çине регион хушăмне – транспорт – çыртараççĕ. Çыннăн кăмăлĕ пур тăк УЭКа вăл электрон мелпе алă пуснине те кĕртеççĕ, унпа документсене алă пусма тата Патшалăх пулăшăвĕсен пĕрлехи порталĕнче пулăшу ĕçĕсене электрон мелпе илме пулать /карт-ридер урлă/.

Утă уйăхĕн 21-мĕшĕ тĕлне Чăваш Енре пурăнакан 16,5 пин çын УЭК илесси пирки заявлени çырнă, 9,1 пинĕ унпа усă курать ĕнтĕ.

■ **И.НИКОЛАЕВА**

Правительствăра

Техника шанчăклă ĕçлетĕр, инкек ан кÿтĕр

Министрсен Кабинечĕн ларăвĕсене республика Пуçлăхĕ ирттернĕ чух кашнинче тенĕ пекех кун йĕркине кĕмен, анчах пĕр-пĕр çивĕч ыйту çĕклет те – калаçу кăшт вăрахарах каяканччĕ, ĕнер вара ларăва вăл мар, Правительство пуçлăхĕ Иван Моторин ертсе пычĕ. Те çавăнпа – лару вăрăм пулмарĕ. Тепĕр тесен кун йĕркинчи ыйтусен шучĕ те яланхинчен пĕчĕкрех – çакă та витĕм кÿчĕ ĕнтĕ.

Сар.ru сайтĕнчи сăн ÿкерчĕк

Республикăн ял хуçалăхне аталантарасси, Общество палати, административлă комиссисем çинчен калакан саккунсен проекчĕсене хăвăрт тишкерсе ырларĕç. Правительствăн маларах тунă хăш-пĕр йышăнăвне улшăнусем кĕртесси те тавлаштармарĕ, çĕнĕлĕхсем темле пысăк пĕлтерĕшлĕ мар – çавăнпа калаçтармарĕç-тĕр.

Ачасен хушма вĕрентĕвĕн «ЮНИТЭКС» автономи учрежденийĕн ятне улăштарассине çирĕплетрĕç. Ятăн кавычкăри пайĕ çавах юлать, анчах çак учреждени малашне çарпа патриот воспитанийĕ паракан центр пулать. Республика бюджетĕнчен пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕх субъекчĕсене производствăна çĕнетме хывнă тăкаксене саплаштарса субсиди памалли йĕркене çирĕплетрĕç. Иван Моторинăн пĕр асăрхаттару кăна пулчĕ: пĕр-пĕр предприниматель темиçе çул каялла хаклă техника илнĕ – хайхи документра вара «унченхи» тăкаксене саплаштарма пăхман. Премьер шухăшĕпе – çын производствăна аталантарма укçа хывнă, пулăшу илмен, эппин, унашкаллисене тĕревлессине те палăртмалла. Документа тивĕçлĕ тÿрлетÿ кĕртес терĕç.

Вице-премьер – финанс министрĕ Светлана Енилина муниципалитетсен республикăн çитес çулсенчи бюджечĕн укçине явăçтарса пурнăçламалли тĕп тăкак обязательствисен списокĕпе паллаштарчĕ. Парламентăн социаллă ыйтусемшĕн яваплă комитечĕн председателĕн Петр Красновăн ыйту çуралчĕ: «Çак списока пăхатăп та – ăна 2015-2017 çулсенче те республикăра пĕр шкул та, пĕр культура учрежденийĕ те тума пуçламастпăр тесе ăнланмалла-и?» Петр Степанович республика ача сачĕсем тунă май юлашки вăхăтра пĕр шкул та çĕклеменнине пăшăрханса палăртрĕ. Финанс министрĕ, премьер çак список муниципалитетсен тĕп обязательствисене палăртни çинчен каларĕç, ку кирлĕ пулсан шкул тума пуçламашкăн чăрмантармĕ, çак тĕллевпе тивĕçлĕ йышăнусене кайран улшăнусем кĕртме те пулĕ. Парламентарие хурав тивĕçтерчĕ пулас.

Правительство ларăвĕсенче пĕрпĕр министерство е ведомство ертÿçи хăй ертсе пыракан тытăм ĕçĕхĕлĕ çинчен анлă отчет тăвасси йăлана кĕчĕ. Ку хутĕнче ЧР Хăй тĕллĕн çÿрекен машинăсен тата ытти йышши техникăн техника лару-тăрăвне сăнаса тăракан патшалăх инспекцийĕн пуçлăхĕ Владимир Димитриев доклад турĕ.

Инспекци ĕçĕ анлă: асăннă техникăна регистрацилесси, техника тĕрĕслевне ирттересси, унпа ĕçлекенсене экзамен тыттарасси... Паянхи кун тĕлне республикăра çак техникăн 23 пин ытла единицине регистрацилене. Çулталăк кааллахипе танлаштарсан çак цифра 8,6% хушăннă. «Хăй тĕллĕн çÿрекен» техникăн 26% яхăн пайĕ – агропромышленноç комплексĕнче, 22% – промышленноç предприятийĕсенче, ытти вара – 57% – уйрăм çынсен харпăрлăхĕнче. Шел те, АПКри машинăсен шучĕ чакса пыни сисĕнет. Тĕш тырă пухса кĕртмелли комбайнсем кăçал 165 единица /11%/ сахалланнă. Чăн та, туянакан çĕнĕ техника кивĕ машинăсенчен чылай хăватлăрах, пĕри темиçе машинăна тăрать – ку аван.

Владимир Павлович пĕтĕм техникăн хатĕрлĕхĕ 56,3% танлашнине палăртрĕ. Хăш-пĕр предприяти кивĕ техникăна та тимĕр-тăмăра ăсатма васкамасть, ТО витĕр кăлармасть, кирлĕ пулма пултарать тесе тытса тăрать. Çакă та, паллах, хайхи хатĕрлĕх кăтартăвне витĕм кÿрет. Юлашки çулсенче снегоход йышши техника шучĕ хăвăрт ÿссе пырать. Пилĕк çул каялла кăна-ха унашкаллисем республикăра 50-ран ытла пулман, халĕ – 600 единица. Вĕсене сунарçăсем, пулăçсем уйрăмах килĕштереççĕ. Анчах çав транспорт хатĕрĕсене те регистрацилемеллитĕрĕслеттермелли пирки манакансем те çук мар. Аса илтерме тивет. Вĕсене кăна мар, ытти техника хуçине те. Ахальтен мар ĕнтĕ штрафланă тĕслĕхсем – çĕр-çĕр. Чăн та, инспекци пуçлăхĕ палăртнă тăрăх, штрафсен виçи пысăк мар – хăшĕсене ку хăратмасть, апла тăк яваплăх та витĕмлĕ теейменĕ.

Вице-премьер – ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертÿçи Александр Иванов отчетпа паллашнă май çурла уйăхĕнче техника хуçисене явап тыттарнине кăтартакан цифрăсем пысăккине асăрхаса сисчĕвленчĕ: «Шăпах – ĕççи тапхăрĕ. Тĕрĕслевсем ирттерсе тыр-пул пухса кĕртме чăрмантармастăр-и?» Хуравне ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов пачĕ: «Шăпах ĕççи тапхăрĕнче техникăпа çыхăннă инкек-синкек ытларах пулать. Çавăнпа та инспекци çак тапхăрта пушшех çине тăрса ĕçлени хуçалăхсемпе предприятисене ку енĕпе тимлĕ пулмашкăн хистет – усăллă».

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

Кокорева халалласа – курав

Комсомольски салинчи "Çĕр тата çынсем" музейра тавра пĕлÿçĕ, вĕрентекен, асăннă аваллăх управçине пуçарса яраканĕ, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Б.Г.Кокорев çуралнăранпа 95 çул çитнине халалласа курав уçнă.

Борис Григорьевич 1919 çулхи утă уйăхĕн 25-мĕшĕнче Кĕçĕн Каçалта çуралнă. Каçал тăрăхĕнчи тĕрлĕ шкулта учительте, завучра, директорта, РОНО инспекторĕнче ĕçленĕ. 1942-1945 çулсенче Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче пулнă. 1980 çулта ăна "ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ" хисеплĕ ят панă. Борис Кокорев шыравпа тавра пĕлÿ ĕçне хастар хутшăннă. "Сокол", "Юные соколята" клубсене ертсе пынă, ачасене историллĕ вырăнсене экскурсие илсе çÿренĕ. "Çĕр тата çынсем" музейăн экспозицийĕсенче Борис Кокорев пуçтарнă нумай документпа тата сăн ÿкерчĕксемпе усă курнă. Курав çурла уйăхĕн 22-мĕшĕччен ĕçлет.

А.ГРОМОВА.

Ялти культура управçи

Ялти культура çурчĕ – халăх сăпки, йăла-йĕркене упракан вучах. Йĕпреç районĕнчи Кĕлĕмкассинчи информацине культура центрне ял çыннисем хаваспах çÿреççĕ. Кунта вĕсем хăйсене кирлĕ, хисеплĕ çынсем пек туяççĕ.

Ялти культура çурчĕ
Культура çулталăкĕ

Ĕлĕкрен ял çыннисем ярмăркка пухăннă. Чуна кантармалли вырăн шутланнă вăл. Çирĕм пĕрремĕш ĕмĕрте вара ярмăркка культура çурчĕ улăштарнă. Кунта ял халăхĕ уявсем йĕркелет, вăхăта усăллă ирттерет. Пĕтĕмлетерех калас тăк – клуб ял чĕри вырăнĕнчех.

Юлашки вăхăтра Кĕлĕмкассисем Геннадий Степанов директор пуçарăвĕпе культура вучахне юсаса çĕнетнĕ. Кунта Йĕпреçри ачасен искусство шкулĕн филиалĕ ĕçлеме пуçланă. Надежда Никандровăпа Екатерина Анисимова ертсе пынипе фольклор ушкăнĕпе ташă кружокĕ ĕçлеççĕ. Пултарулăх ушкăнĕсем районти, республикăри конкурссенче яланах малти вырăнсене йышăнаççĕ. Клуб çумĕнчи тĕслĕх вулавăш та вулакана яланах хапăл. Çу тата кану вăхăчĕ пулнине пăхмасăрах культура çурчĕ яланах уçă. Кунта чăваш эстрада артисчĕсен концерчĕ тăтăш иртет, ачасем валли цирк килет.

Р.ИВАНОВА.

«Ункă шевлисем»

Çак ятпа Çĕрпÿ тăрăхĕпе Шупашкар районĕн чиккинче чăваш халăх юррисен фестивалĕ иртнĕ.

66 çухрăма тăсăлакан юхан шыв Шупашкар, Муркаш, Красноармейски, Çĕрпÿ районĕсене çыхăнтарать. Ункă шывĕ Кÿкеç тăрăхĕнчи Ункăпуç ялĕн çывăхĕнче пуçланать. Çак вырăнах юрă-ташă хастарĕсене уява йыхравланă. Çĕрпÿ районĕнчи Кăшаркасси клубĕн ертÿçи Михаил Андреев пуçарнипе иртнĕ фестивальте тĕрлĕ ялтан çитнĕ фольклор ансамблĕсем халăха илемлĕ юрă-ташăпа савăнтарнă. Уявра Патăрьелти «Тевет» ушкăн (ертÿçи Л.Яковлева) уйрăмах хастар пулнă. Вĕсем куракансене çепĕç те янăравлă сассипе кăна мар, Р.Беловăпа Н.Семенова ал ăстисем хатĕрленĕ хитре тумсемпе те тыткăнланă.

А.ПЕТРОВ.

Физкультурник кунĕ тĕлне – çĕнĕ стадион

Сăмах – Çĕнĕ Шупашкарти ачасемпе çамрăксен 1-мĕш спорт шкулĕнчи футбол уйĕ пирки.

«2008-2015 çулсенче Раççей Федерацийĕнче футбола аталантарасси» программăпа килĕшÿллĕн футболпа туслисем валли унта çĕнĕ стадион çĕкленет. Ăна тумашкăн республика бюджетĕнчен – 7 млн, федераци хыснинчен 8,4 млн тенкĕ уйăрнă. Химиксен хулинче ĕçлĕ çул çÿревпе пулнă май строительство еплерех пыни-пе ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та паллашнă, ĕçе вăхăтра вĕçлеме хушнă. Палăртмалла: объекта çурла уйăхĕн 9-мĕшĕ тĕлне – ун чухне пирĕн çĕр-шывра Физкультурник кунне паллă тăваççĕ – хута яма тĕллев лартнă. Çав кунах çĕнĕ стадионта Чăваш Ен Правительствин тата Çĕнĕ Шупашкар хула администрацийĕн командисен хушшинче футбол матчĕ иртĕ.

А.МИХАЙЛОВ.

Çанталăк çинчен

Паян пĕлĕтлĕ çанталăк пулать. Çил çурçĕр-хĕвел анăçĕнчен 2 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 22, çĕрле 13 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 749 мм, сывлăшри нÿрĕк 49 процент.

Кун тăршшĕ 16 сехет те 36 минут.

Ыран уяр çанталăк пулать. Çил çурçĕр-хĕвел анăçĕнчен 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 22, çĕрле 14 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 750 мм, сывлăшри нÿрĕк 37 процент.

Кун тăршшĕ 16 сехет те 32 минут.

ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

УЯВСЕМ ÇЫНСЕНЕ ÇЫВĂХЛАТАÇÇĔ

Юлашки çулсенче ырă юхăм вăй илет: йăхташăмăрсем мăн асаттесен вăхăтĕнче туса ирттернĕ йăла-йĕркене чĕртсе тăратма тăрăшаççĕ. Акатуй, акă, чăвашсемшĕн кăна мар, урăх халăх çыннисемшĕн те юратнă уяв пулса тăчĕ. Мăнкун, Çимĕк, Питрав, Илен... Ытти уявра ял-йыш, кÿршĕ-аршă, тăван-пĕтен пĕрле пухăнса савăнать. Чăваш Енре çеç мар, республика тулашĕнче пурăнакан ентешĕмĕрсем те авалхи йăла-йĕркене упраса хăварма тăрăшни пирки хыпарлаççĕ.

Йăла-йĕркене туса ирттерни аван паллах. Мĕн шухăшлаттарать-ха мана? Кашни уявăн, йăлан хăйĕн тĕллевĕ, пĕлтерĕшĕ, уйрăмлăхĕ пур. Хальхи вăхăтра вара вĕсене пăхăнсах каймаççĕ. Акă Чĕмпĕр облаçĕнчен нумаях пулмасть Хăят пăтти çиме пухăнни, Çерçи чÿкĕ ирттерни çинчен пĕлтерчĕç. Çерçи чÿкĕн курăмлă уйрăмлăхĕ вăл – çерçие пуçĕнчен пуçласа хÿри таран тип çу сĕрсе вĕçтерсе яни. Хĕвел тухăçнелле кайни /чÿк тунă енне/ тырă ăнса пуласса пĕлтернĕ. «Кĕлĕ тунă кĕллĕмĕр турă патне çитрĕ», – тенĕ. Çырура çерçи вырăнне кăвакарчăн вĕçтерни пирки пĕлтереççĕ. Пĕр кайăк вырăнне тепри пулни е авалхи йĕркене пăсни /улăштарни/ «кĕлĕ тунине турă патне çитерĕ-ши?»

Çимĕк – çуллахи вăхăтра вилнисене çăва çине кайса асăнни – пур çĕрте те анлă паллă тăвакан уяв. Хăш-пĕр вырăнта ăна виле тухнă кун теççĕ. Мăн асаттесен саманинчен пирĕн ĕмĕре çитиччен вăл та чылай улшăннă /е çĕнелнĕ/. Çакă чăвашсем православи тĕнне йышăннă хыççăн вăл Троицăпа пĕрлешсе кайнипе те çыхăннă ахăртнех.

«Анатри чăвашсен пĕр пайĕ – православи чиркĕвĕ çирĕплетнĕ Троица шăмат кунĕнче, тури чăвашсем пурăнакан хăш-пĕр ялта – кĕçнерни кун, Чăваш Енĕн кăнтăр районĕсенче тата республика тулашĕнчи вĕсемпе юнашартарах вырнаçнă тăрăхсенче Троица кунĕнче Çимĕке паллă тăваççĕ. Ирхине е маларах мунча хутнă. Çичĕ тĕрлĕ йывăç тураттинчен милĕк пĕçернĕ, çитмĕл çичĕ тĕслĕ курăк шывĕ вĕретнĕ. Малтан арçынсем мунчана кайнă. Вĕсенчен асли вилнисене тăванлăх паллине пĕлтерекен сăмахсемпе, питĕ тахçан çĕре кĕнисене «ваттисем» тесе çăвăнма чĕннĕ. Унтан хĕрарăмсем мунча кĕнĕ. Пурте çăвăнса тасалнă хыççăн кил хуçи арăмĕ лапка çине тирĕкпе шыв, алтăр лартнă, стена çумне милĕк таянтарнă, вилнисене çăвăнма йыхравланă», – тенĕ «Чăваш энциклопедийĕнче». Ĕлĕкхи йăлана тĕпе хурса мунча хутакан та сайра халĕ.

Çимĕк кунĕнче вилнисен чунĕсем ялта, кил-çурт таврашĕнче çÿреççĕ имĕш. Çавăнпа хытă калаçма, вăрçăнма, шав çĕклеме /вĕсем хăраса вĕçсе кайма пултараççĕ/, йĕппе çĕлеме /хачăпа лектерсе е йĕппе тăрăнтарса суранлатасран/, урама таса мар шыв тăкма /тăвансен чунĕсене вараласран/ юраман.

Çимĕкре кашниех çăва çине çитме тăрăшать. Ирех апат-çимĕç хатĕрлеççĕ, икерчĕ пĕçереççĕ. Малтанхи виçĕ çатмарине вилнисене асăнма уйăрса хăвараççĕ. «Пачăшкă хытарсах каларĕ: «Масар çине эрех илсе каяс тăк вуçех те ан кайăр», – тет кашнинчех анне. Анчах турă çыннин сăмахне те, авалтан пыракан йăлана та хисепе хуман çынсем пурри пăшăрхантарать. Çăва çине ярмăркка кайнă пек каяççĕ. Уяв сĕтелĕ янтăлаççĕ тейĕн. Чăвашсен авалхи тĕнче курăмне тĕпе хурсан – апат-çимĕç тулăх пулмалла паллах, мĕншĕн тесен çак кун чĕррисем мар, çут тĕнчерен кайнисем хăналанаççĕ. Хальхи вăхăтра мĕнле пулса тухать-ха? Вил тăприсем çине эрехне, сăрине ытларах лартнăн туйăнать. Ĕçеççĕ, кăшкăрашаççĕ... Иртен-каяна хăйсем патне чĕне-чĕне илеççĕ: «Тахçанах курман, тыт-ха куркине, ĕçмесен çилленетĕп, мана хисеплеместĕн...» Пуçланать вара çапларах юмах-сăмах. Хăнара тейĕн. Юлашкинчен вара вил тăприсен хушшинче выртса юлакан та çук мар. Питĕ килпетсĕр ÿкерчĕк паллах. Сăваплă шутланакан вырăнта çав териех «хавасланни» – манăн шухăшăмпа – пĕрре те вырăнлă мар. Çимĕкре салху кăмăлпа çÿреме юрамасть тенĕ-ха. Кулса савăнса чĕррисем çĕр çинче ырлăх курса пурăннине çирĕплетеççĕ. Анчах виçесĕр çак хаваслăха масар çинче палăртмалла мар ахăртнех. Ĕлĕк вил тăприсенчен аякри лапамсене вăйăа тухнă çамрăксем. Унта тин качча тухнă хĕрарăмсем те хутшăннă.

Çамрăксен вăйăисем те манăça тухса пыраççĕ. Эпĕ ача чухнехи çулсенче хĕр-упраçпа яш-кĕрĕм шăмат кун каçхине ялтан виçĕ-тăватă çухрăмри вăрмана каятчĕ. Вăйă картине тăрса юрланă, ташланă ĕнтĕ вĕсем, çулталăкри пысăк уяв çитнишĕн хĕпĕртесе савăннă /шел, мана çакна курма шăпа пÿрмен/. Хапхасене, чÿречесене хурăн турачĕсемпе илемлетни те куç умĕнчех, ешĕллĕх ахаль куна уяв сĕмĕ кĕртетчĕ. Шел, çук хальхи вăхăтра пирĕн тăрăхра кунашкал йăла-йĕрке.

«Çимĕк – чи юратнă уяв», – тенĕччĕ Елчĕк районĕнчи пĕлĕшĕм. Вăл, Питĕрте пурăнаканскер, çулталăкра пĕр хутчен тăван ялне амăшĕ патне килет. Ятарласа Çимĕк тĕлне отпуск илме тăрăшать. «Çăва çинче шкулта пĕрле вĕреннĕ, ÿснĕ ачасене тĕл пултăм. Тахçанах курманччĕ, – Çимĕк каçхине хапха умĕнче ларнă чухне чарăнса тăрса каласнăччĕ вăл. – Клуб тĕлĕнче сасăсем илтĕнеççĕ-ха. Çавăнталла каятăп халĕ. Тен, ачалăхри тусăмсенчен тата кама та пулсан тĕл пулăп?»

Кашниех Çимĕкре вилнĕ тăванĕсене масар çине кайса асăнма тăрăшать. Çавăнпах çынсем аякран тăван ялĕсене васкаççĕ. Чăнах та, çак енчен пăхсан Çимĕкĕн пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк. Вăл ялйыша, тăвансене, пĕлĕшсене пĕр çĕре пухать, пĕтĕçтерет.

■ **Валентина БАГАДЕРОВА**

Тарса килнĕскерсене тĕрев кирлĕ

Ытлари кун Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Раççей Правительствин председателĕ Дмитрий Медведев видеоконференци мелĕпе ирттернĕ селектор канашлăвне хутшăннă. Унта тĕпрен илсен Украинăри Донецк тата Луганск облаçĕсенчен Раççей территорине килекен çынсене регистрацилес, вырнаçтарас ыйтусене сӳтсе явнă.

Премьер-министр палăртнă тăрăх – РФ территорине паянхи кун тĕлне 144 пин çын килнĕ, вĕсем Федерацин миграци службинчен ĕçлессипе çыхăнман статус ыйтнă. «Пирĕн пата Украина гражданĕсем ахаль те йышлăн килсе çӳренĕ – ĕçлеме, çак 144 пин çын вара – ĕçпе çыхăнман статус илес текенсем», – тенĕ Дмитрий Медведев. Раççейĕн чикĕ çумĕнчи регионĕсем çак юхăма йышăнма вăй ситереймеççĕ, кĕркунне тата хĕлле çынсене палатка лагерĕсенчен ăшă çуртсене куçармаллине шута илсен – пушшех. Çавăнпа çĕр-шывăн ытти субъекчĕн майĕсене кура çынсене унта куçармалла.

Дмитрий Медведев Правительство йышăну кăларни çинчен пĕлтернĕ, унпа килĕшӳллĕн вăхăтлăх пурăнмалли пунктсем йĕркелемешкĕн регионсене трансфертсем пама пăхнă. Бюджет ассигнованийĕсен виçи – 3,5 млрд тенкĕ. Çавăн пекех Украина гражданĕсене йышăнассине йĕркелеме ФМСа 780 млн тенкĕ параççĕ.

Федерацин миграци службин ертӳçи Константин Ромодановский пĕлтернĕ тăрăх – Украинăн Раççей территорийĕнчи гражданĕсен йышĕ нарăсăн 1-мĕшĕнчипе танлаштарсан – 30%, ачасен йышĕ икĕ хут ытла ӳснĕ /Крыма шута илмесĕр/. Халĕ Раççейре – Украинăн 1,96 млн гражданинĕ. Ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пуçласа килнисем тата кунта пурăнакансем – 515 пин çын. Вĕсем – Украинăн кăнтăр-хĕвел анăç облаçĕсен çыннисем. Çак йышăн 80% ытла пайĕ – чикĕ çумĕнчи территорисенче.

Утă уйăхĕн 22-мĕшĕ тĕлне Чăваш Республикинче Украинăн 345 гражданинĕ пулнă. Çав шутра 226 çын – ĕçлеме пултаракан çулсенчи çынсем, 43-шĕ – шкул çулне çитмен ачасем, 52-шĕ – шкул çулĕсенчи ачасем. Тарса килнĕ май кунта вăхăтлăх пурăнма ирĕк памашкăн ФМС управленийĕнчен 260 çын ыйтнă.

Чăваш Ен территорине хăйсем тĕллĕн килекенсем тăванĕсемпе пĕлĕшĕсем патĕнче, çавăн пекех вăхăтлăх икĕ пунктра /«Контур» АУО тата «Чăваш Ен-курорт» АУО базисенче/ вырнаçаççĕ. Врачсен бригадисем вĕсен сывлăхне тĕрĕслессине йĕркеленĕ.

Республикăна куçса килсе кунта ĕçе вырнаçас кăмăллă граждансем валли йĕркеленĕ вакансисен ятарлă банкне куллен çĕнетеççĕ, унта – 1,5 пин ытла пушă ĕç вырăнĕ. Çав шутра 651-шĕ – пурăнмалли кĕтеспе тивĕçтерекен вакансисем. Çак кăтартусене Чăваш Республикин влаç органĕсен порталне, ЧР Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин официаллă сайтне кĕртнĕ.

Утă уйăхĕн 21-мĕшĕ тĕлне республикăри вĕрентӳ организацийĕсене Украинăн 22 гражданинĕ заявка панă. 6 çын – шкулчченхи вĕрентӳ учрежденийĕсене, 14 çын – пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан, 2 çын – професси пĕлĕвĕ паракан учрежденисене. 20 ачана вĕренме йышăннă та ĕнтĕ. Тата 2-шне, професси вĕрентĕвĕн учрежденийĕсенче пĕлӳ илес кăмăллăскерсене, тивĕçлĕ йĕркепе утă уйăхĕн 25-мĕшĕ хыççăн йышăнĕç.

■ **Д.ПЕТРОВ**

Саккун

Вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелесси тавра

Юлашки вăхăтра пирĕн республикăра федерацин 2014 çулхи çу уйăхĕн 27-мĕшĕнчи "Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен саккун кăларакан /представитель/ тата патшалăх влаçĕн ĕç тăвакан органĕсене йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен" федераци саккунĕн 26.3 статйине улшăнусем кĕртесси çинчен" 136-ФЗ №-лĕ саккунне тата "Раççей Федерацийĕнче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен" саккунне питĕ анлăн сӳтсе яврĕç.

Чăваш Республикинче утă уйăхĕн пуçламăшĕнче ĕç ушкăнĕ туса хунă, вăл тĕрлĕ район-хулана çитсе вырăнти ертӳçĕсемпе, депутатсемпе, ĕç коллективĕсемпе, общество организацийĕсен представителĕсемпе, халăхпа тĕл пулса калаçнă, вĕсен шухăш-кăмăлне ыйтса пĕлнĕ. Асăннă саккунсене ЧР Общество палатинче йĕркеленĕ "çавра сĕтелте" те тишкерчĕç. Палата председателĕ Леонид Шимин РФ Патшалăх Думи ырланă улшăнусем регионсене хăйсен территорийĕнчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тытăмне йĕркелемелли мелсене палăртассипе çыхăннă ирĕкне /полномочийĕсене/ анлăлатнине каларĕ. Маларах "Раççей Федерацийĕнче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен" 131-ФЗ №-лĕ саккунĕ çак вариантсене муниципалитет йĕркеленĕвĕн уставĕпе килĕшӳллĕн палăртнă тăк, халĕ вара ку йĕркене Раççей Федерацийĕн субъекчĕн саккунĕ палăртĕ. Унсăр пуçне федераци саккунĕнче вырăнти ыйтусен переченĕ ял тата хула тăрăхĕсем валли урăхларах пулмаллине асăннă.

2015 çултан пуçласа хула тăрăхĕсем вырăнти пĕлтерĕшлĕ 39 ыйтăва татса пама тивĕç, ял тăрăхĕсем – 13. Çавăн пекех вырăнти пĕлтерĕшлĕ 38 ыйтăва муниципалитет районĕсем тытса пырĕç.

Федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн округри халăх суйланă /представитель/ органĕсем 2 мелпе йĕркеленме пултараççĕ. Пĕрремĕшĕ – районсен представитель органĕсен йышĕнчен. Иккĕмĕшĕ – муниципалитет суйлавĕ урлă. Саккунра муниципалитет йĕркеленĕвĕн пуçлăхне суйласси пирки калани те пур. Вăл муниципалитет суйлавĕнче е представитель органĕн йышăнавĕпе хăйĕн йышĕнченех суйланма пултарать. Малтанхи тĕслĕхре пуçлăх муниципалитет йĕркеленĕвĕн представитель органĕн йышне татса паракан сасă ирĕкĕпе кĕрет тата унăн председателĕн тивĕçĕсене пурнăçлать е вырăнти администрацие ертсе пырать. Иккĕмĕш тĕслĕхре представитель органĕн председателĕн пуканне йышăнать. Хула округĕсенчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем пирки калас тăк юлашки улшăнусемпе килĕшӳллĕн хуласене районсене пайлама юрать. Ун пек чухне хуласенчи районсен шайĕнче депутатсен корпусĕсене туса хума тивет, унсăр пуçне вĕсен хăйсенех бюджет йышăнса ăна пурнăçлама, вырăнти налуксене туса хума е пăрахăçлама, пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерме, тирпей-илем кĕртессин правилисене т.ыт.те палăртма тивет.

Леонид Шимин Раççей Президенчĕ Владимир Путин каланă сăмахсене аса илтерчĕ: "Кашни территори хăй татса пама тивĕç: вырăнти влаç тытăмне, вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли хăш меслет граждансен интересĕсене ытларах тивĕçтерĕ, муниципалитет йĕркеленĕвĕн пуçлăхне тӳрĕ суйлавпа палăртмалла е ку ирĕке муниципалитет влаçĕн представитель органне шанса памалла?"

"Çавра сĕтел" ĕçне хутшăннисем саккун пирки хăйсем мĕн шухăшланине пĕлтерчĕç. Сӳту-яву вăхăтĕнче тавлаштаракан самантсем те пулчĕç. ЧР Муниципалитет йĕркеленĕвĕсен канашĕн ĕç тăвакан директорĕ Станислав Николаев ку саккуна тахçантанпах кĕтнине палăртрĕ. 131 ФЗ №-лĕ саккуна темиçе хут та улшăну /200 ытла/ кĕртни те лару-тăрăва сисĕнмеллех урăхлатма май паман.

Ĕç калăпăшне чăтайманран, хăйĕн тивĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçласа пыманран тата ытти сăлтавпа 2010 çултанпа 70 ытла ял тăрăхĕн пуçлăхĕ ĕçрен кайнă.

"Çĕнĕ саккунпа килĕшӳллĕн чылай ыйтăва регионсене татса пама шаннă. РФ субъекчĕсен тивĕçлĕ саккунĕсене тĕпе хурса – вĕсенче, паллах, вырăнти уйрăмлăхсене, кадрсемпе çыхăннă лару-тăрава, йăла-йĕркене тата ыттине те шута илмелле – региона вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли меслетсене палăртăпăр. Пирĕн умра тепĕр пысăк ĕç те тăрать: маларах ял тăрăхĕсен 39, хула округĕсен 40-45 полномочи пулнă, çав хушăрах вĕсене укçа-тенкĕпе тивĕçтермен. Халĕ вара ку полномочисен шутне чакарнă. Ку – ĕçĕн тепĕр тапхăрĕ", – терĕ Станислав Николаев.

ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Генрих Васильев шухăшĕпе – пирĕн республикăри хуласене пайлама кирлех мар, мĕншĕн тесен вĕсем пысăках мар. Генрих Геннадьевич хăй те ĕç ушкăнĕнче пулнине, унăн пĕр йышĕпе Вăрнар, Етĕрне, Элĕк районĕсенчи çынсемпе курнăçнине пĕлтерчĕ. Çĕнĕ саккун сĕнекен тĕрлĕ меслете суйласа илесшĕн вĕсем. Нумайăшĕ "Муниципалитет районĕн пуçлăхне тӳрĕ суйлав кăтартăвĕсемпе уйăрса лартмалла, унăн вырăнти администрацие те ертсе пымалла" тесе шухăшлать иккен. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем пирки пĕрисем "виçĕ должноçра та пĕр çын пулмалла: ял тăрăхĕн тата унăн администрацийĕн пуçлăхĕ, çав хушăрах ял тăрăхĕн депутачĕсен пухăвĕн ертӳçи те" теççĕ, теприсем "виçĕ çак ертӳçĕне те ял тăрăхĕн депутачĕсен йышĕнчен суйламалла" меслете ырлаççĕ.

ЧР Общество палатин социаллă ыйтусемпе ĕçлекен комиссийĕн председателĕ Крета Валицкая, влаç органĕсенче ĕçленĕскер, Шупашкарта пĕр пуçлăх пулмалла тесе шухăшлать.

Республикăра управлени тытăмĕ пĕрешкел пулмалла тесе палăртрĕ Крета Лазаревна. Палатăн граждан обществине аталантарас тата граждансен прависене хӳтĕлес енĕпе ĕçлекен комиссийĕн председателĕ Александр Дельман пĕр пин çын пурăнакан ял тăрăхĕнче вуншар депутат пулнипе кăмăлсăр. "Ял тăрăхĕсемпе районсенче депутат нумай чухне вĕсем пĕр-пĕрне кансĕрлеççĕ, мĕншĕн тесен влаçшăн кĕрешӳ пырать. Унта кукăль пайласа лармалла мар, ĕçлемелле те ĕçлемелле", – терĕ вăл.

Леонид Шимин "çавра сĕтел" ĕçне пĕтĕмлетнĕ май унта хутшăннисене тав турĕ, республика саккунне йышăннă чухне çынсен ытларах пайĕн шухăш-кăмăлне тĕпе хурассине пĕлтерчĕ.

* * *

ЧР Юстици министерстви вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене йĕркелемелли принципсем çинчен калакан федераци саккунĕн положенийĕсене тата халăхăн шухăш-кăмăлне тĕпе хурса Чăваш Республикин "Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелесси çинчен" саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен" саккунĕн проектне хатĕрленĕ. Ăна обществăра сӳтсе явма тăратаççĕ.

Асăннă саккун проектĕнче вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене йĕркелемелли çак йĕркесене палăртнă: муниципалитет йĕркеленĕвĕн представитель органне муниципалитет суйлавĕнче суйламалла; хула округĕн пуçлăхне, хула тăрăхĕн пуçлăхне асăннă муниципалитет йĕркеленĕвĕн уставĕпе килĕшӳллĕн çак муниципалитет йĕркеленĕвĕн представитель органĕ хăйĕн йышĕнчен суйлать; муниципалитет районĕн пуçлăхĕ муниципалитет суйлавĕнче суйланать тата вырăнти администрацие ертсе пырать; ял тăрăхĕн пуçлăхне представитель органĕ хăйĕн йышĕнчен суйлать, пуçлăх ял тăрăхĕн представитель органĕн председателĕн полномочийĕсене пурнăçлать тата вырăнти администрацие ертсе пырать. Хула округĕн, хула тăрăхĕн пуçлăхне контрактпа /конкурс пĕтĕмлетĕвĕсемпе тăваннипе/ килĕшӳллĕн уйăрса лартаççĕ.

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелесси çинчен" саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен" саккунĕн проекчĕпе çыхăннă сĕнӳсене ЧР Юстици министерствине кăçалхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕччен ярса пама юрать.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

Çитес çул пурнăçламалли проектсем

Культурăпа искусство тытăмне патшалăх енчен пулăшасси – çĕнĕлĕх мар ĕнтĕ. Унсăр асăннă сфера аталанайман пулĕччĕ. 2006 çултанпа Чăваш Республикин Пуçлăхĕн гранчĕсене парса пыраççĕ. Унпа профессионал пултарулăх коллективĕсен вăл е ку проектне пурнăçа кĕртме тивĕçтереççĕ. Çак тапхăрта ку енĕпе мĕн тунă-ха?

Паян Чăваш Ен Пуçлăхĕн грантне тивĕçсе кун çути курнă чылай проект сцена çинче пырать. Пирĕн нацин пĕрремĕш мюзиклĕ «Нарспи» халĕ те аншлаг пуçтарать, вăл 2009 çулта литературăпа искусство енĕпе Чăваш Республикин Патшалăх премине тивĕçнĕ. Чăваш патшалăх филармонийĕн «Авалхи сас» музыкăпа театрализациленĕ программи тата «Чăваш çĕрĕн чи лайăх юррисем» проекчĕ пурнăçа кĕчĕç. Чăваш патшалăх операпа балет театрĕнче çак майпа усă курса «Каçхи шуçăм çути», «Сарпике» балетсем тата «Шывармань» наци опери лартнă. Иртнĕ çул театр «Нарспи» – историе упрани. Чăваш музыка-театр культурин ĕнчи – 21-мĕш ĕмĕрти ăрава» проекта пурнăçа кĕртме ЧР Пуçлăхĕн грантне тивĕçнĕ. Çĕнĕ ĕçпе куравçăсем çĕнĕ сезон пуçламăшĕнчех паллашма пултарĕç.

Грант пулăшăвĕпех Чăваш патшалăх академи юрăпа ташă ансамблĕн сцени çине «Сурхури», «Халăхăн ĕлĕкхи ташшисем», «Юхать юхăм шыв» вокалпа хореографи сюитисем тухнă. Куравçăсем килĕштерсе пăхаççĕ вĕсене.

Театрсене илес тĕк – Вырăс драма театрĕн «Отражение» проектне палăртса хăварни вырăнлă пулĕ. Асăннă проекта пурнăçа кĕртсе вырăс классикĕсем Николай Гогольпе Иван Тургенев çинчен спектакльсем тата вĕсен ĕçĕсене – «Ревизорпа» «Вешние воды» – лартнă. Чăваш академи драма театрĕ «Вырăс классики Чăваш театрĕн сцени çинче» проектпа Александр Пушкин çуралнăранпа 210 çул çитнине халалласа унăн «Каменный гость» произведенине кăларчĕ. Иртнĕ кĕркунне Çамрăксен театрĕ чăваш поэзийĕн çирĕммĕш ĕмĕрĕн классикĕсен – Çеçпĕл Мишшин, Петĕр Хусанкайăн, Митта Ваçлейĕн тата Геннадий Айхин – пултарулăхĕсене тĕпе хурса куравçăсене «Чĕрĕ сăмах» ревюн премьерине пуçтарчĕ.

«Чĕрĕ сăмахăн» авторĕ Геннадий Айхи пултарулăхне ахальтен суйласа илмен. Тĕнчипе паллă ентешĕмĕр пурăннă пулсан кăçалхи çурла уйăхĕн 21-мĕшĕнче 80 çул тултармаллаччĕ.

Гранта тивĕçни Чăваш патшалăх ӳнер музейĕн коллекцине 2009 çулта хальхи вăхăтри художниксен чи лайăх произведенийĕсемпе пуçласа пуянлатма май панă. Асăннă музей, культурăпа çут ĕç учрежденийĕ шутланаканскер, паян тепĕр проектпа – «Çитмĕл пиллĕкмĕш кĕркунне. Искусствăри пурнăç» /Чăваш патшалăх ӳнер музейне йĕркеленĕренпе 75 çул çитнĕ май/ – ĕçлет.

Çак кунсенче çитес çул пурнăçа кĕртмелли проектсен çĕнтерӳçисене палăртнă. Вĕсене кашнине 2856000 тенкĕ уйăрса парĕç. Камсем-ха вĕсем?

Чăваш патшалăх филармонийĕ – «Ачасен чăваш юррисен «Мехел çитсен» фестивалĕ» проект /ертӳçи Николай Казаков/;

Чăваш патшалăх академи симфони капелли – «Аслă Çĕнтерӳ ячĕпе» /Чăваш Республикин хулисемпе районĕсенче ирттерекен концертсен ярăмĕ/ проект /ертӳçи Морис Яклашкин/;

Чăваш наци музейĕ – «Чăваш тĕррин музейĕ. 1-мĕш тапхăр» проект /ертӳçи Ирина Меньшикова/.

■ **Надежда СМИРНОВА**

Çĕнĕ пулăшусем, илĕртӳллĕ условисем

Реклама

2014 çулхи пĕрремĕш çур çул кăтартăвĕсем тăрăх "Раççей ял хуçалăх банкĕ" АУОн Чăваш регион филиалĕн пĕтĕмĕшле кредит портфелĕ 11,5 млрд тенкĕпе танлашнă. Сăмахран, юридици сăпатĕнче тăракансен кредит портфелĕ – 6,0 млрд, уйрăм çынсен 5,4 млрд тенкĕрен иртнĕ.

Банк пĕчĕк тата микробизнеса пулăшассине тивĕçлипе хаклать. Клиентсен асăннă ушкăнне кĕрекенсен кредит портфелĕ çулталăк пуçланнăранпа 9,8 процент пысăкланса 2,7 млрд тенке çитнĕ. Филиал Раççей ял хуçалăх банкĕн кредичĕсен çĕнĕ пулăшăвĕсене памалли пилот проекчĕсене – "Васкавлă йышăну", "Микро" тата "Чи юрăхлă" /"Оптимальный"/ – хутшăнмашкăн ăнăçлă хатĕрленсе çитнĕ. Вĕсене микробизнес сегменчĕн клиенчĕсене кирлĕ пек оптимизациленĕ тата опцисен тулли секторне – заявкăсене çийĕнчех пăхса тухассине, кредитăн нумай вăхăтлăх тăсăмне, тапхăрпа финанслама пултарассине – палăртса хунă.

Клиентсен хутшăнтарнă укçин виçи юридици сăпатĕнче тăракансен депозичĕсемпе, халăх хывнă укçапа тата клиентсен счечĕсенче юлнă суммăсемпе пĕрле 2014 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне 7,5 млрд тенкĕпе танлашнă е çулталăк пуçланнăранпа 9,5 процент ӳснĕ.

Кăçалхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен Раççей ял хуçалăх банкĕ депозитсем тата вкладсем тăрăх ставкăсене хăпартнипе пĕрлех укçа-тенке пайталлă условисемпе хывмалли çĕнĕ пулăшусем кĕртнĕ. Тĕслĕхрен, республикăра пурăнакансем 2014 çулхи утă уйăхĕн 24-мĕшĕччен банкăн ятарлă сĕнĕвĕсемпе – процент ставкисем ӳссе пыракан "Сезонлă" тата "Сезонлă пенсиллĕ" вкладсемпе усă курчĕç, çурла уйăхĕн 31-мĕшĕччен "Чи нумай пухăнакан укçа" тата "Чи пысăк комфорт" вкладсем уçма пултараççĕ.

Чăваш регион филиалĕн директорĕ Ирина Письменская палăртнă тăрăх – кредит учрежденийĕн кăтартăвĕсен ӳсĕмĕ банк финанс пулăшăвне пурне те юрăхлă тăвассишĕн тăрăшнипе тӳрременех çыхăннă. Хальхи йышши çĕнĕ технологисене пурнăçа кĕртнине тата клиентсен ыйтăвне тивĕçтернин пахалăхне ӳстерме пуçаруллă хутшăннине пула республикăри финанс тытăмĕнче банк кăтартуллă ĕçлекенсен шутне кĕнĕ те ĕнтĕ.

"Раççей ял хуçалăх банкĕ" АУО. РФ Тĕп банкĕн 3349 №-лĕ генеральнăй лицензийĕ.

ВУЛАКАН ЫЙТАТЬ, СĔНЕТ, АСĂРХАТТАРАТЬ

Манăça тухнă çил арманĕ

Ку сăн ӳкерчĕке иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче Çĕрпӳ районĕнчи Туçи çывăхĕнче тунăччĕ. Шел, хирте тăлăххăн ларакан çил арманĕн хуçи камне пĕлме май килмерĕ ун чухне. Хăй вăхăтĕнче вăл ку тăрăхри халăха тăрантарса тăни иккĕлентермест паллах. Космос ĕмĕрне кĕричченхи хăйне евĕрлĕ палăк паянччен сыхланса юлнă-ши – пĕлместĕп. Çавна май 1986 çулта Елчĕк районĕнчи Курнавăшри Иван Курчин кивĕ çил арманне юсаса çĕнетни тата ĕçлеттерме пуçлани аса килчĕ. «Вырăнти пуçлăхсене кунта хăйне евĕр кану вырăнĕ тума сĕнес тетĕп-ха: кафе уçчăр, кĕвĕ-çемĕ те чуна тыткăнлатăр», – тенĕччĕ вăл.

Тăван ялта, Шупашкар районĕнчи Хачăкра, çил арманĕ пулман паллах. Ункă шывĕн вăйĕпе урасисене çавăрттаракан арман вара ĕçленĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн утмăлмĕш çулĕсенче унăн çĕрĕшнĕ юписем ларнине ас тăватăп. Çавсене вутта ярас тĕллевпе пынă В.Чернов ватăна аслатиллĕ вăйлă çумăр вăхăтĕнче аçа çапнăччĕ.

Сăмах май, каярахпа электричество вăйĕпе ĕçлеттермелле тунă арман паян «чĕмсĕррĕн» ларать, унпа усă куракан çук. Тепĕр тесен лавккана пилĕк çухрăмра вырнаçнă Ишлейри пекарньăран çăкăр-булка, кĕлентĕр турттарса сутă туни те ял халăхне тивĕçтерет. Шупашкар–Вăрнар шоссерен Хачăка юпленсе анакан çулпа пынă май Ункăпа Муркаш шывĕсен хĕррипе сарăлса выртакан уйсем алă тупанĕ çинчи пек курăнаççĕ. Унта та кунта çуначĕсемпе хăлаçланса ларакан çил арманĕсене ача чухне чылайччен сăнаттăмăр. Халĕ курăнми пулчĕç, тӳпене вĕçсе хăпарса çухалнă тейĕн.

Çăнăх, кĕрпе авăртма çил арманĕ кирли пирки пымасть кунта сăмах. Çакă вăл – пирĕн историпе пурнăçăн пĕр пайĕ шутланать вĕт. Кун пирки культура çулталăкĕнче аса илмеллех.

■ **Александр МОКИН.**
Шупашкар хули.
Сăн ӳкерчĕкĕ авторăн

Кĕчкее кĕме кансĕр

Яла транспорт хатĕрĕпе кĕрсе çӳрекен водительсем Кĕчкей çулĕ япăх пулнишĕн пăшăрханаççĕ. Вун-вун çул каялла, «Аксаринский» совхоз йĕркеленсен, сарнă асфальт яла пырса кĕнĕ çĕрте ванса-арканса пĕтнĕ.

«Çула юсаттарас пирки хамăр коллектив пухăвĕсенче пĕрре кăна мар калаçнă, пуçлăхсене çакăн çинчен çӳлерех тăракан органсене пĕлтерме ыйтнă», – теççĕ «Шупашкар – Кĕчкей» маршрутпа çӳрекен автобус водителĕсем Николай Колбасовпа Андрей Иванов.

«Аксаринский» совхозран Карапашсем уйрăлса тухсан эпĕ хамăр тата Кĕчкей ялĕсен управляющийĕ пулнăччĕ. Ку тăрăхра хытă сийлĕ çул сартарассишĕн нумай тăрăшрăмăр. Унăн пĕр енĕпе яла çитичченех вăрман кашласа ларать, – аса илет ĕç ветеранĕ Алексей Игнатьев. Кунти авалхи чиркĕве турра ĕненекенсем Карапашран, Вăрман тата Уй Пилемĕчсенчен, Акшикрен тата ытти çĕртен çăмăл машинăсемпе çӳреççĕ. Вĕсем те çул япăххипе нушаланаççĕ.

Вулăс центрĕ пулнă, Кĕчкей пăлхавĕпе историе кĕрсе юлнă, анлă Атăл хĕрринчен инçех мар вырнаçнă çак яла тăсăлакан çула йĕркене кĕртмеллех. Пирĕн шухăшпа – çакăншăн вырăнти хăй тытăмлăх органĕн ытларах тăрăшмалла.

■ **Кĕчкей ялĕнче пурăнакансем ыйтнипе – Анатолий Анишов.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ

Чечек çыххи

Çак ĕç-пуç иртнĕ çул пулса иртнĕччĕ. Ун чухне пасартан таврăннă май Маруç кӳршĕ хĕрарăмĕпе чунне уçса калаçнăччĕ, çаврăнăçусăр пулнăшăн хăйне ӳпкелесе пынăччĕ: «Ухмах мар-и вара? Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ çывхарса килнине, ыран пĕлӳ кунĕ пулнине мансах кайнă. Манпа тăракан сутуçă икĕ сехетре виçĕ пин тенкĕлĕхрен кая мар чечек сутрĕ. Черет тăрсах туянчĕç вĕт. Ыран ирех эпĕ те йăтса тухас тетĕп-ха. Хăшĕ-пĕри илмесĕр юлнах...»

Аван уйăхĕн 1-мĕшĕнче Маруç таварĕ каймарĕ, чечек çыххисене каялла йăтса таврăнма тиврĕ унăн. Пĕр-икĕ кун шывра лартнă хыççăн çӳп-çап купине тухса пăрахрĕ. Кăçал чечек йăранĕ унăн çур пахча йышăнать. Çурла уйăхĕн вĕçнелле пурте çеçке çурмалла. Вĕсенчен хитре çыхă майлаштарса пĕлӳ кунĕ умĕн пасара илсе тухасшăн хĕрарăм, услам тăвасшăн.

Анук аппан пахчинче те чечек нумай. Сутас тĕллевпе мар, илемĕпе киленес, мăнукĕсене вĕсен илĕртӳлĕхне туйма вĕрентес тĕллевпе ӳстерет кинемей. Район центрĕнче пурăнакан хĕрĕн икĕ тĕпренчĕкĕ, ашшĕ сарăмсăр вилнĕ хыççăн амăшĕн хӳттинче юлнăскерсем, шкула каймашкăн кукамăшĕнчен илемлĕ çыхă майлаштарса пама ыйтаççĕ. Тĕрĕссипе, ăна вĕсем пĕрле пухаççĕ: асли кăтартса пынипе кĕçĕннисем чечек çумне чечек хураççĕ...

Анук аппа тивĕçлĕ канăва тухиччен шкулта ĕçленĕ. Вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнче ăна та ачасем çыххи-çыххипе чечек парнеленĕ. Анчах çапла майпа саламланине ветеран чунĕ йышăнасшăнах мар, мĕншĕн тесен хăшĕ-пĕри ывăлхĕрне шкула тумлантарса ямашкăн юлашки укçине тăкаклать, чечек çыххине кивçене кĕрсе туянать.

Ку ыйту мана та канăççăрлантарать: вĕренӳ çулĕ пуçланнă кун шкула чечек çыххи йăтса каймалли йăлана кам шухăшласа кăларнă? Тулăх пурăнакансемшĕн çакнашкал илем пысăк тăкак кӳмест тейĕпĕр. Сахал тупăшлă тата йышлă çемьесемшĕн вара самаях сисĕмлĕ. Çав вăхăтрах Маруç пек сутуçăсем услам тăваççĕ, ачине пылак çимĕç илсе парас вырăнне чечек валли янисен пур-çук укçипе енчĕкĕсене пуянлатаççĕ.

Савăнăçлă линейкăра вĕрентекенсене ачасем парнеленĕ çыхăсенчен чылайăшне /вĕсем килĕшнĕ икĕ-виçĕ çыхăна хăйсемпе пĕрле илсе кайнине шута илмесен паллах/ ĕç кунĕ вĕçленнĕ тĕле тирпейлӳçĕсем çӳп-çап купине кайса тăкаççĕ. Тĕплĕнрех шутлăр-ха: миçе пин тенкĕ усăсăр çухалать?

Эпир вĕреннĕ вăхăтра, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи хыççăнхи çулсенче, аван уйăхĕн 1-мĕшĕнче шкула чечек йăтса кайнине ас тумастăп. Тен, хулара пулнă пуль. Халĕ вара ялти ачасем те вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнче кăна мар, садике çӳреме тытăннă чухне те хăйсенчен пысăк çыхăсем йăтса пыраççĕ...

Чечек кăмăла çĕклет, çынна хисепленине пĕлтерет. Çакна эпĕ лайăх ăнланатăп. Анчах та пасарта укçалла туянни мар, пахчара ху лартса çитĕнтерни, тирпейлĕн майлаштарса çыхса юратнă вĕрентекене парнелени, мĕншĕн тесен çак чечеке пăхса ӳстермешкĕн эсĕ чунăн пĕр пайне хывнă, унăн ăшшине панă.

Ку, паллах, манăн, пурнăç тути-масине самаях тутанса курнă ветеранăн, шухăшĕ. Вулакансем хирĕçлеме те пултараççĕ.

■ **Александр ВИШНЕВСКИЙ.**
Шупашкар хули

Валентина СМИРНОВА хатĕрленĕ.

Утă, 25: РФ Следствии органĕсен сотрудникĕн кунĕ

Следствии вăрттăнлăхĕсем

Утă уйăхĕн 25-мĕшĕнче следовательсем кăçал пуçласа Следствии органĕсен ĕçченĕн кунне паллă тăваççĕ. Çак куна суйласа илни 1713 çулта шăпах утă уйăхĕн 25-мĕшĕнче I Петĕр патша следствии канцелярине туса хурасси çинчен калакан указ кăларнипе сăлтавланнă. Çак канцеляри Раççей патшалăхĕн тӳрремĕнех патшана пăхăнакан тата следствии полномочийĕсем панă пирвайхи органĕ пулса тăнă. Çав полномочисен шутĕнче патшалăх никĕсне пырса тивекен преступленисене – взятка илнине, хысна укçине вăрланине, службăри ултава – тĕпчесси те пулнă. Императора çеç пăхăнакан следствии органĕсем пысăк должноçсенчи çынсене айăплас тĕлĕшпе те объективлă пулма пултарнă.

Паллă кун умĕн эпир РФ Следствии комитечĕн республикăри Следствии управленийĕн ертӳçипе Александр МИГУШОВПА курнăçрăмăр, вăл ертсе пыракан тытăмăн ĕçĕпе кăсăклантăмăр.

Ĕççĕр юлмăпăр

– Александр Петрович, статистикăна ĕненес тĕк – республикăра преступленисен шучĕ çуллен чакса пырать. Ӳстеререх калатăп пуль-ха, çапах та – хĕвеллĕ пĕр-пĕр кун ĕççĕр юласран шикленместĕр-и?

– Чăнах та, пĕлтĕр Чăваш Енре 14,5 пин преступлени пулнă – çулталăк маларахринчен чылай сахалрах. Кăçал та çак туртăм палăрать: регистрациленĕ преступленисен шучĕ иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 10% патнелле пĕчĕкрех. Çавна май патшалăхăн мĕн пур тытăмĕн ĕçĕнче ырă туртăмсем пурри куç кĕрет.

Ĕççĕр юласран хăрамастпăр-и? Пĕр преступлени те пулманни, тĕпчемелли нимĕн те çукки – кунашкалли право хуралĕн органĕсен сотрудникĕн пурнăçĕнчи чи лайăх кун пулĕччĕ. Анчах чăнлăх урăхларах: преступлени тăвассине тĕппипех кăклама питĕ йывăр. Çапах преступленисен, чи малтанах йывăр, уйрăмах йывăр тĕслĕхсен шутне чакармашкăн мĕн пур мера йышăнма пулать. Çавнашкаллисен пĕтĕмĕшле шучĕ кăçал 20% яхăн пĕчĕкленчĕ. Çын вĕлернĕ тĕслĕхсем сахалрах. Рецидивлă преступленисем – 8% яхăн, ушкăнпа /15% ытла/, ӳсĕрле /9% яхăн/, ĕçлемен çынсем /8% яхăн/, çул çитменнисем /1/3 чухлĕ/ тунă преступленисем те сахалланнă. Çав вăхăтрах общество вырăнĕсенче пулнă тĕслĕхсем кăшт нумайланни сисĕнет. Унсăр пуçне уçса парайман преступленисем те юлаççĕ. Çавăнпа та пирĕн валли ĕç çителĕклĕ-ха. Тĕп тĕллев шар курнисен прависене хӳтĕлесси, айăплисене саккунпа явап тыттарасси-çке.

Коррупци тымарĕсем тарăн та çирĕп

– СК ĕçĕн тĕп çул-йĕрĕнчен пĕри – коррупципе çыхăннă преступленисене тĕпчесси. Чылай чухне право хуралĕн органĕсене çак кĕрешӳ педагогсене, ПАИ инспекторĕсене кăна пырса тивет, çӳллĕрех шай вара «сулхăнра» юлать тесе ӳпкелеççĕ. Çакна хирĕçлеме пултаратăр-и? Республикăра коррупци уйрăмах хăш сферăсенче тарăн тымар янă?

– Цифрăсемпе хуравлам. Кăçал Чăваш Енри Следствии управленийĕн органĕсем коррупци сĕмĕллĕ 200-е яхăн пĕлтерӳ йышăннă, çав тĕслĕхсемпе уголовлă 140 ĕç пуçарнă, судсене уголовлă 30 ытла ĕç ярса панă. Пирĕн следовательсем тĕпченĕ ĕççенчен 30 ытларахăшĕ – правăна тӳрре кăларакан сферăра, 10 ытла – финанс ĕçхĕлĕнче. Вĕрентӳ, строительство, çуртйĕрпе тивĕçтерессин сферисенче те преступленисем пулнă. Следствии çирĕплетнĕ сиен – 2 млн ытла тенкĕлĕх. Ăна саплаштармашкăн айăпланакансен пурлăхне арестлемелли мерăпа анлăн усă куратпăр.

Педагогсемпе ПАИ инспекторĕсем тенĕрен, саккун ямăттине хапсăннăшăн уголовлă майпа явап тыттармалли сăлтавсене уççăн çирĕплетнĕ. Следователь преступлени пулни çинчен пĕлтернине йышăнать тĕк, ан тив, «вак-тĕвек» кăна пултăр, çак пĕлтерĕве туллин тĕрĕслеме, информаци çирĕпленсен уголовлă ĕç пуçарма тивĕç. Хăшĕ-пĕри 1 пин тенкĕлĕх взятка право хуралĕн тытăмĕн пысăк аппаратне тытса тăмалли сăлтав мар теме пăхĕ, камăн уйăхри тупăшĕ пысăк мар – вĕсемшĕн çак укçа та бюджетăн курăмлă пайĕ. Акă мĕншĕн кунашкаллине курмăш тума юрамасть.

Çав вăхăтрах сирĕнпе те килĕшетĕп. Вут хумасăр çулăм тухмасть. Общество кăмăлсăр тăк – эппин, сăлтавĕ пур. Çакна та калам: юлашки çулсенче эпир тĕрлĕ шайри чылай чиновник тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕççене тĕпченĕ.

Шутласа пăхрăмăр: 2011-2014 çулсенче коррупципе çыхăннă преступленисемшĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен 61 ĕççенне суд тенкелĕ çине лартнă, вĕсене 250 ытла преступленишĕн айăпланă. Çав шутра 33-шĕ – муниципалитетсен /ял тăрăхĕсен, райцентрсен, хуласен/ пуçлăхĕсем, вĕсем 110 ытла преступлени тунă. Списокра – Етĕрне, Сĕнтĕрвăрри районĕсен, Çĕнĕ Шупашкар, Етĕрне, Çĕмĕрле, Çĕрпӳ хулисен, Йĕпреç, Вăрнар поселокĕсен, Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă, Муркаш ялĕсен администрацийĕсен ертӳçисем, вĕсен çумĕсем пулнă çынсем. Халĕ Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕн архитектура тата хула тăвас ĕç ыйтăвĕсемпе ĕçленĕ çумĕ, ЖКХ управленийĕн транспорт тивĕçтерĕвĕн тата çыхăну пайĕн пуçлăхĕн уголовлă ĕçĕсене тĕпчетпĕр. Иккĕшне те саккуна пăсса предприниматель ĕçне хутшăннă тесе шанмастпăр.

Право хуралĕн органĕсен хăйсен хăрушсăрлăхĕн подразделенийĕсемпе алла-аллăн ĕçлесе вĕсен сотрудникĕсем коррупципе çыхланнине уçăмлататпăр. РФ Следствии комитетне туса хунăранпа, 2011 çултанпа, влаçăн 50 ытла представителĕн коррупципе çыхăннă ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларнă. Çав шутра – шалти ĕçсен органĕсен 22, айăплава пурнăçлакан тытăмăн 12, суд приставĕсен службин 15 сотрудникĕ, право хуралĕн ытти тытăмĕн ĕçченĕсем. Вĕсене пĕтĕмпе 200 ытла должноç преступленийĕшĕн айăпланă.

Пурте пĕчĕк çынсем, вак-тĕвек преступлени тееймĕн. Калăпăр, Федерацин миграци службин Чăваш Енри управленийĕн, Федерацин пушар хурал службин республикăри сăнав лабораторийĕн, ШĔМĕн Сĕнтĕрвăрринчи пайĕн пуçлăхĕсене, милицин патрульпе пост службин полкĕн командирне, тĕп хула полицийĕн 3-мĕш пайĕн следствии подразделенийĕн пуçлăхне, Патăрьел районĕн полицийĕн ертӳçисене /астармăш вăйă бизнесне хӳтĕленĕшĕн/, Шупашкарти ОП-4 пайĕн пуçлăхне, çак подразделенин уголовлă шырав пайĕн пуçлăхне /проституци ĕçне хӳтĕленĕшĕн/, ытти-сене уголовлă майпа явап тыттарнă. Иртнĕ çул вĕçĕнче айăпсăр гражданссене наркотиксен саккунсăр çаврăнăшĕшĕн явап тыттарнăшăн Наркотĕрĕслев управленийĕн оперуполномоченнăйĕ пулнăскер 14 çуллăха ирĕклĕхсĕр юлчĕ.

«Чиновник» тата «вăрă» – синонимсем мар

– Тепĕр чух çакăн пек шухăш та çуралать: çынсем влаça, пысăк должноçсене ытларах вăрласа юлас тесе кăна килеççĕ тейĕн... Ку шухăшпа килĕшетĕр-и?

– Ниепле те килĕшме пултараймастăп. Çапла, чиновниксен тĕлĕшпе уголовлă ĕçсем пур тетпĕр. Анчах патшалăх тата муниципалитет служащийĕсен тĕп йышĕн ячĕ-сумĕ таса, вĕсем хăйсен тивĕçĕсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлаççĕ. Кирек кам та йăнăшма пултарать, çакăн хакĕ кăна – тĕрлĕ. Телее, уголовлă йĕркепе хакламалли йăнăшсене влаçри çынсен пĕчĕк пайĕ çеç тăвать.

– Моисеев, Дергачев, Дружинин... Çакнашкал шайри çынсен ĕçĕсене сирĕн следовательсем тĕпчеççĕ. Ку ытти ведомство следователĕсен «шăл витменнине» пĕлтерет-и?

– Уголовлă процесс кодексĕн 151 статйи хăш ĕçсене хăш тытăм тĕпчемеллине палăртать. Эсир асăннă çынсене виççĕшне те взяткăшăн айăпланă – кунашкаллине шăпах пирĕн следовательсем тĕпчессине çирĕплетнĕ. Унсăр пуçне пирĕн ведомствăна коррупципе çыхăннă чылай ытти преступление, налук сферинчи, предприятисене рейдер мелĕпе ярса илнипе, бандитизмпа, преступленисен пĕрлĕхĕсене йĕркеленипе, экстремизмпа çыхăннă преступленисене тĕпчеме шаннă.

Çавăн пекех Следствии комитечĕн уйрăм право статусĕллĕ çынсене уголовлă майпа явап тыттармалли право пур: мĕн пур шайри депутатсене, судьясене, право хуралĕн органĕсен сотрудникĕсене, адвокатсене, ытти «VIP-персонăна». Апла пулин те ку ытти тытăм следователĕсем вăйсăррине пĕлтермест. Саккунпа килĕшӳллĕн урăхларах преступленисене тĕпчеççĕ – çавă çеç. Çакна та палăртам: коррупци сĕмĕллĕ преступленисен тĕп пайне оперативлă шырав ĕçĕн кăтартăвĕсене тĕпе хурса /Следствии комитечĕн унашкал полномочисем çук/ шăпах республика ШĔМĕн, ФХС управленийĕн сотрудникĕсем тупса палăртаççĕ. Çапла вара çӳллĕ шайри коррупционерсене тăрă шыв çине кăларни – пирĕн следовательсен, ытти ведомствăн оперативлă подразделенийĕсен саккунсăр схемăсене тупса палăртма хутшăнакан сотрудникĕсен пĕрлехи ĕçĕ.

– Пытармасăр калăр-ха, сирĕн пата «çӳллĕ» кабинетсенчен шăнкăравлаççĕ-и, вăл е ку çын хутне кĕрсе ăна тĕкĕнес марччĕ тесе ыйтаççĕ-и?

– Тен, ĕненместĕр те пуль, çапах хăвăр ыйтнă пек – «пытармасăр калатăп»: хамăн служба тапхăрĕнче вăл е ку кабинетсенчен «ан тĕкĕнĕр» тесе ман пата пĕрре те шăнкăравламан. Мана пăхăнса тăракансен те унашкалли пулман. Унсăрăн çийĕнчех тивĕçлĕ мерăсем йышăнаттăмăр. Çакна та аса илтерем: малтанхи тĕпчев тапхăрĕнче производствăна чăрмантарнăшăн уголовлă яваплăх палăртнă.

Герой Çăлтăрĕ те тӳрре кăлармасть

– Раççей Геройне Евгений Борисова арестлени калаçтарать. Мĕншĕн çавнашкал чару мери кирлĕ пулнă? Паллă, пурте пĕлекен çын – следствирен тарса пытанаймастчĕ пуль... Саккунсăр тупăш виçи те ыйтусем çуратать: астармăш вăйăсен çичĕ йĕркелӳçи 1,5 млн тенкĕ услам илнĕ-мĕн – нумай теейменĕ. Полици пайĕн пуçлăхне Иванова 15 пин тенкĕ взятка пани тата... Унăн шалăвĕ те пĕр 5 хут пысăкрах-тăр...

– Паллах, уголовлă çак ĕç обществăра шăв-шав çĕклерĕ. Эпир Интернетра çуралнă мĕн пур сас-хура, шухăш тĕлĕшпе хамăрăн официаллă Интернет-сайтра хурав патăмăр. Паянхи кун тĕлне уголовлă ĕçе тĕпчесси малалла пырать. Паллă çынна арестлени пирки: хальлĕхе пĕтĕмпех уçса параймастăп, анчах следстви интересĕсене кура ун тĕлĕшпе шăпах çакнашкал чару мерипе усă курмашкăн судран ирĕк илме тиврĕ. Унсăрăн явап тыттараясси иккĕленӳллĕ пулма пултаратчĕ. Суд следовательпе килĕшрĕ, шанман çынна арестлерĕ. Фигурантăн хӳтĕлевçи ЧР Аслă судне çак йышăну тĕлĕшпе çăхав панă, анчах судăн çӳллĕрех инстанцийĕ ăна вăйрах хăваснă.

Полицейские панă тесе шухăшлакан взятка виçине илес тĕк – саккунсăр хавхалантару укçин çак виçи те уголовлă ĕç пуçарма çителĕклĕ. Следстви малалла пырать, çавăнпа та юлашки пĕтĕмлетӳсем пирки калама иртерех.

– Следователь ĕçĕ – романтика кăна мар вĕт. Следствин кану кунĕ çук тесе ахальтен каламан. Следстви комитечĕн Чăваш Енри управленийĕн следователĕ – мĕнлерех вăл, пĕтĕмĕшле портрет сăнлаятăр-и? Çамрăк сотрудниксем нумаййине куратăп. СК хăй те – çамрăк тытăм...

– Пĕтĕмĕшле ӳкерчĕк тетĕр те – манăн шухăшпа, пирĕн следователь – ĕçе лайăх пĕлекен, хăйĕн квалификацине ӳстерсех пыма ăнтăлакан специалист. Çапла, пирĕн сотрудниксен çурри – службăри пилĕк çул таран стажлă специалистсем. Апла пулин те прокуратура органĕсен следствийĕн чи лайăх йăлисене çӳллĕ шайра тытса пыма мехел çитеретпĕр – эпир, тĕрĕссипе, 2011 çулхи кăрлачра шăпах çав тытăмран тухнă вĕт.

Пирĕн сотрудниксенчен нумайăшĕ прокуратурăра следовательте ĕçленĕ, акă мĕншĕн çав çулсенчи çирĕп требованисене тивĕçтерме тăрăшатпăр. Сăмах май, хăшпĕр енĕпе ку требованисем тата та çирĕпленчĕç. Професси уявĕ çывхарнă май прокуратурăн следстви ветеранĕсене тав тăвас килет – вĕсем пирĕн çамрăк сотрудниксене паян та пулăшса пыраççĕ. Чи лайăх следовательсен ячĕсене те асăнас килет те, анчах уяв ячĕпе йĕркелекен савăнăçлă ларуччен тăхтам, «интрига» текенни упрантăр.

Преступниксенчен темиçе утăм малта

– Преступниксем паян ăста, тĕрлĕ техникăпа усă кураççĕ. Следстви вара мĕнпе хуравлать, сирĕн майсем ĕлкĕрсе пыраççĕ-и? Тепĕр самант: мĕнле истори вăл – следовательсем ĕçре гипнозпа усă кураççĕ имĕш?

– Следстви комитечĕн тĕп аппарачĕ территорисенчи подразделенисене çĕнĕ криминалистика техникипе туллин тивĕçтерме тăрăшать, çакă следствишĕн кирлĕ лару-тăрăва уçăмлатма пулăшать, ку вара преступниксене тăрă шыв çине кăларас ĕçре пысăк пĕлтерĕшлĕ. Экспертиза учрежденийĕсемпе тачă çыхăну тытатпăр – вĕсем тĕрлĕ-тĕрлĕ тĕпчев ирттерме пултараççĕ.

Сăмахран, халĕ панорама 3D-фотоӳкерӳ текен криминалистика меслетне алла илтĕмĕр, унпа преступлени пулнă вăхăтри ӳкерчĕке тĕрĕс сăнлама пулать – хăйне евĕрлĕ «виртуаллă тур» йĕркелесси таранах. Çакă уголовлă ĕçе судра присяжнăйсене явăçтарса тишкернĕ чухне айăпа ĕнентерме уйрăмах меллĕ. Ахаль çынна преступлени лару-тăрăвне ăнланма, иккĕн чăн калăпăшне курма-хаклама ансат мар-çке. Çавăн пекех мобильнăй тата электрон хатĕрсенчен «тасатнă» информаци «тупакан» ятарлă аппаратпа та усă куратпăр. Эксперт çутин çăл куçĕ тата цианакрилат камери вара çын куçне курăнман преступлени йĕрĕсене те «асăрхаççĕ», вĕсем çын вĕлернĕ тĕслĕхсенче айăпли паллă мар, çавăн пекех çынна мăшкăлланипе çыхăннă преступленисене тĕпченĕ чух уйрăмах усăллă.

Полиграф /«суя детекторĕ» текенскер/ пулăшнипе йĕркелекен психофизиологи тĕпчевĕпе анлăн усă куратпăр. «Йăлана кĕнисемпе» пĕрлех халĕ генетика, одорологи /шăршă йĕрĕсен экспертизи/ тата ытти экспертиза ирттересси те час-часах пулать.

Гипноз пирки ыйтрăр. Нумаях пулмасть преступленисене уçса пама гипнорепродукципе те усă курма тытăнтăмăр. Вăл çынна хăй маларах пулнă лару-тăрăва тавăрма, пысăк пĕлтерĕшлине, сăмахран, преступник паллисене, унăн сассине, сăнне аса илтерме май парать. Преступление пула шар куракан çын ытларах чухне стреса лекет, преступлени саманчĕсене манса каять-çке. Çак тĕллевпе врач-психологсене ĕçе явăçтарма пултаратпăр. Практикăра эпир хальлĕхе ку мелпе усă курман-ха, полиграф пекех – тĕрĕслекен çын хăй килĕшсен кăна усă курма юрать. Ку меслетсем сывлăха сиен кӳмеççĕ, анчах айăплине явап тыттарма, шар курнин прависене хӳтĕлеме пулăшаççĕ.

Следователь чĕри те чул мар

– Преступлени пулнă вырăна хăвăр час-часах каятăр-и е ку «патша ĕçĕ» мар-и? Прокуратурăра вăрах ĕçленĕ, паян СК управленине ертсе пыратăр. Çак çулсенче преступниксен хаярлăхне е, тен, урăх сăлтава пула уйрăмах асра юлнă тĕслĕхсем пулнă-и? Преступниксемпе вĕçĕмсĕр хутшăнма, юн, вилĕм курма тивнĕ май следователĕн хăнăху, чурăслăх туйăмĕ çуралать-и?

– «Патша ĕçне» пула мар, Следствии управленийĕн ертӳçин ытти ĕç те нумаййине пула инкек пулнă вырăнсене час-часах тухма май килмест, çапах кайма тăрăшатăп – «шавлă» преступленисене тĕпчеме тивнĕ чух, айăплисем паллă мар пулсан... Асра юлнисем – Çĕрпӳ районĕнчи Туçи ялĕнче пурăнмалли нумай хваттерлĕ çуртра газ сирпĕнсен унта пулнăччĕ, Шупашкарта пачăшкăна вĕлерсен...

Ачасем тĕлĕшпе йывăр преступленисем пулни пушшех чуна ыраттарать. Ирсĕрле мăшкăл тĕслĕхĕсем – вĕсене пирĕн тĕпчеме тивет. Пĕчĕк ачасене вĕлерни çӳçентерет. Унашкалли ан пултăрччĕ.

Туйăр пуль, кирек мĕнле пулсан та следователь хытă чунлă пулма пултараймать. Психологсем «професси деформацийĕ» текен пулăмăн хăш-пĕр палли пуртăр, анчах унсăрăн та май çук, следователь ĕçĕ – киревсĕр кашни ĕçе туйăмсене ирĕке ямасăр тĕпчесси.

– Сăмах май, çул çитменнисене мăшкăллана, намăс ĕçсем тунă тĕслĕх сводкăсенче ытла та нумай. Ĕлĕкрех апла марччĕ пек. Тен, пулнă, анчах кун çинчен каламан кăна?

– Çавнашкал тĕслĕх çинчен кăна мар, следстви йышăнакан мерăсем пирки те пĕлтерме тăрăшатпăр. Çавна май тепĕр чухне массăллă информаци хатĕрĕсенче пĕр преступлени тĕлĕшпех темиçе пĕлтерӳ пулма пултарать. Тен, кунашкал преступленисем нумайланнăн туйăнни çакăнпа та çыхăннă пуль.

Статистика пур. Сăмахран, 2013 çулта асăннă йышши преступленисене пула 51 ача шар курнă. 2012 çулта вара – 60. Куратăр пуль, кăштах чакнă. Кăçал ачасем тĕлĕшпе пулнă, ар хутшăнăвĕпе çыхăннă преступленисем пĕлтĕрхи шайрах. Палăртни вырăнлă: право хуралĕн органĕсем ача тĕлĕшпе пулнă преступлени пирки çийĕнчех пĕлмессе те пултараççĕ. Пĕр тĕслĕх асра: ашшĕ хăйне мăшкăллани çинчен хĕрĕ 13 çул иртсен, хăй 18 çул тултарсан, тин пĕлтернĕччĕ. Арçынна тата икĕ хĕр ачана мăшкăлланă тесе шанмасăр тытса чарнă та – хĕрĕ тинех хăрушлăх сирĕлнине ăнланса илнĕ, хăй те шар курни çинчен евитленĕ.

Çавăнпах кунашкал тĕслĕхсенче мĕн тумалли пирки ашшĕ-амăшĕ валли ятарлă памятка хатĕрлерĕмĕр /вăл пирĕн http://chuvashia.sledcom.ru сайтра пур/. Вĕсем тĕрĕс йышăну туни – хăйсен ачине мăшкăл кăтартнă çынна тупса палăртмалли, уголовлă майпа явап тыттармалли никĕс.

– Криминал сериалĕсене, детективсене пăхатăр-и? Чылайăшĕнче преступниксем – ырă сăнарсем, пакунлисем, çав шутра следовательсем вара – усаллисем, айăпсăрринне хупса хурасшăн, айăплине ăнтăлаççĕ – çакă пăшăрхантармасть-и?

– Çивĕч ĕç графикĕ çавнашкал сериалсене йĕрлесе пыма май памасть. Ытларах хыпарсен кăларăмĕсене пăхатăп – республикăра, çĕр-шывра, тĕнчере мĕн пулса иртнине пĕлсе тăмалла. Çапах сирĕн çавнашкал ыйту çуралать тĕк – пăшăрханма сăлтав пур-тăр.

Следстви комитечĕ эсир калакан çак туртăма хирĕç тăма тăрăшать. «Тайны следствия» телесериала халăх килĕштерсе пăхать, унта тĕп тата ырă герой – СК следователĕ. Чăн уголовлă ĕçсен материалĕсем тăрăх «Следственный комитет» телесериал та ӳкернĕ. Пирĕн управлени те айккинче юлмасть. Халăха хамăр тĕпчекен «шавлă-пĕлтерĕшлĕ» уголовлă ĕçсем пирки çийĕнчех тата объективлă пĕлтерме тăрăшатпăр – чăн паттăрсем тата суя паттăрсем пирки пурте пĕлччĕр. Куншăн «Хыпар» хаçата та тав тăватăп – республикăра пурăнакансем унăн страницисенче пирĕн следовательсем тĕпченĕ, шăв-шав çĕкленĕ преступленисем пирки тăван чĕлхепе вуласа пĕлме пултараççĕ.

– Тавах интереслĕ те уçă калаçушăн.

– Хăвăра пысăк тав. Меллĕ самантпа усă курса ĕçтешсене, Раççей Федерацийĕн следстви органĕсен сотрудникĕсемпе ветеранĕсене професси уявĕ ячĕпе саламлатăп – ăна кăçал пуçласа паллă тăватпăр!

Следовательсен тивĕçĕ – çынсен шăпипе çыхăннă ыйтусене яваплăха туйса тата тимлĕ татса парасси. Граждансен хăрушсăрлăхĕ, ырлăхĕ, çынсем тĕрĕслĕх çĕнтерĕвне, граждансен, обществăпа патшалăхăн саккунлă прависемпе интересĕсен хӳтлĕхĕн тухăçлăхне ĕненесси пирĕн профессионализмран нумай килет. Уяв ячĕпе саламланă май пурне те çирĕп сывлăх, çемьере тăнăçлăх, Раççейшĕн пурнăçлакан пархатарлă ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем сунатăп!

■ **Николай КОНОВАЛОВ калаçнă**

Энергетика

Киловатт-сехетсене – тĕрĕс тараса çине

Реклама

«Акă, пирĕн Çурçĕр производство уйрăмĕн ертӳçисем электричество вăрланине çирĕплетнĕ çынсем тĕлĕшпе черетлĕ административлă ĕçсем пуçарма сĕнеççĕ, – каласа парать «Атăл çинчи МРСК» АУОн /«Россети» АУО ГК тытăмне кĕрет/ «Чăвашэнерго» филиалĕн директорĕн хăрушсăрлăх енĕпе ĕçлекен çумĕ Николай Миронов сĕтел çинчи хутсене кăтартнă май, – пĕр тĕслĕхре киловатт-сехетсене 5 пин ытла тенкĕлĕх вăрланă, тепринче килĕшӳ тумасăр усă курнă энерги хакĕ 3 пин тенкĕрен иртнĕ». Пит çирĕп айăплав мар-ха. Линисемпе хăйсем тĕллĕн çыхăннăшăн, электричествăпа çапла усă курнăшăн административлă майпа кăна мар, уголовлă йĕркепе те айăплама пултараççĕ. Электроэнерги вăррисем тĕлĕшпе РФ УК 165 статйин 1 пайĕпе усă курма пулать – хуçана улталаса пурлăх тĕлĕшĕнчен сиен кӳнĕшĕн пысăк штраф тӳленисĕр пуçне ирĕклĕхсĕр юласси те часах.

«Электроклептомансен» сĕмсĕрлĕхĕ виçесĕр. Нумаях пулмасть Красноармейски районĕнче пăтăрмах сиксе тухнă: электроэнерги вăрланă чухне алăранах ярса тытнă гражданин сеть компанийĕн баланс тата электроэнергие шута илекен ушкăнĕн сотрудникĕ çине алă çĕкленĕ. «Çапла, хирĕçӳллĕ самантсем пулкалаççĕ: йытăпа та вĕслетеççĕ, усал сăмахсем те калаççĕ, анчах çакăн пек уççăнах вăйпа усă курни – пуçласа», – теççĕ энергокомпани представителĕсем. Çав тĕслĕхпе полици адмĕç пуçарнă – айăпли тивĕçлипе явап тытĕ.

Электроэнергипе килĕшӳ тумасăр тата шута илмесĕр усă курнипе кĕрешесси ытахальтен пурнăçлакан ĕç мар. «Россети» АУО ертӳçисем обществăн экономика хăрушсăрлăхне тата унăн ĕçĕн çирĕп тăнăçлăхне тивĕçтерессине электросеть комплексĕн тĕп тĕллевĕсен шутне кĕртеççĕ. Çулленех «Чăвашэнергон» хăрушсăрлăх, электроэнерги транспорчĕн управленийĕсен ĕçченĕсем тата полици тӳрĕ кăмăллă мар потребительсене тупса палăртас енĕпе вун-вун рейд ирттереççĕ. Ялсене час-часах тухса çӳресе «малти фронтра» çак ĕçе баланс тата электроэнергие шута илекен ушкăн сотрудникĕсем те куллен пурнăçлаççĕ. Энергетиксем мĕнешкел сиен тӳснине тавçăрма йывăр мар. Вăл питĕ пысăк. Ку – электролинисене юсама, çĕннисене тума, çĕнĕ оборудовани туянма каймалли укçаччĕ.

Тепĕр тесен ĕçĕ «Чăвашэнерго» тӳсекен тăкакра кăна та мар. Усă курнă энергишĕн тӳленĕ чух перекетлес тесе паянхи кулибинсем темле мелпе те усă кураççĕ: электросчетчик ĕçне сĕмсĕррĕн чăрмантараççĕ, проводсене ун умĕн çыхăнтараççĕ, сывлăшри электролинисем çине провод ывăтаççĕ... Çак хăтланусене пула электричество сечĕсем çине ытлашши «тиев» лекет, электроэнерги пахалăхĕ чакать. Çавна май йăлари техника кăна сиенленмест, тĕрлĕ инкек, пушар пуласси те инçе мар. Çапла вара ним айăпсăр çынсем шар кураççĕ.

Акă мĕншĕн энергетиксем вырăнсенчи администрацисен пуçлăхĕсем пулăшасса шанаççĕ, саккунпа килĕшӳллĕн вĕсем хăйсен территорийĕсене энергипе тивĕçтерессишĕн те яваплă вĕт. Паллах, халăхшăн та ик айкки те тăвайкки пулмалла мар. Кашни РЭСрах «хĕрӳ лини» телефонĕсем ĕçлеççĕ, хăрушсăрлăх управленийĕн те «шанăç телефонĕ» пур – /8352/ 39-92-62. Вĕсемпе электроэнерги вăрланă тĕслĕхсем пирки пĕлтерме пулать. Энергокомпанире кăмăллăн палăртрĕç: çынсен ăнланулăхĕ улшăнать, чылайăшĕ хăйсен криминалпа çыхăннă интересĕсене мала хурса ыттисен ырлăхĕ çине суракансемпе çырлахасшăн мар – çавнашкал граждансем систернĕ май электричество вăррисене тупса палăртнă тĕслĕхсем нумайлансах пыраççĕ.

Усал пулăмпа энергетиксем анлăн кĕрешнине палăртмалла – вăрăсене тупнипе кăна çырлахмаççĕ. Унашкаллинчен сыхланни пĕлтерĕшлĕ: кивĕ счетчиксене çĕннисемпе, тĕрĕсрехисемпе, улăштараççĕ, çĕнĕ потребительсене çыхăнтармалли процедурăна ансатлатаççĕ, электролинисене реконструкциленĕ чухне изоляциллĕ проводсемпе /СИП/ усă кураççĕ – вĕсемпе вăрттăн çыхăнаймăн.

Сăмах май, çав СИП тĕслĕ металлшăн çунакансене те, çăмăл услам шыраса электролинисене куç хывакансене, илĕртмест – усси сахал-çке. Çапла, энергетика объекчĕсенчен пурлăх вăрланă тĕслĕхсем сахалланаççĕ, нумаях пулмасть кăна-ха унашкалли çуллен темиçешер теçетке пулатчĕ, çапах электрооборудовани управлăхĕ пур пĕр пăшăрхантарать. Çулталăк пуçланнăранпа республикăра пурлăх вăрланин виçĕ тĕслĕхне шута илнĕ – Улатăр, Тăвай, Пăрачкав районĕсенче. Улатăрта ĕçлекен подстанцирен трансформатор çăвне юхтарса кайнă. «Çусăр ĕçленĕ май трансформатор юрăхсăра тухать – ку тĕслĕхре те çапла пулнă, – ӳпкелеççĕ энергетиксем, – паллах, оборудование хута ятăмăр, потребительсене электричествăсăр хăварма юрамасть, анчах тупса палăртман çав çынсен хăтланăвĕ пирĕншĕн хакла ларчĕ – 70 пине яхăн тенкĕлĕх».

Тăвай районĕнче вара преступление уçса панă – айăпли суд умне тăрĕ. Вăл вăхăтлăх ĕçлемен электролинин 15 км проводне каснă. Кунашкалли ан пултăр тесе энергетиксем оборудование сӳтсе хума тăрăшаççĕха. Филиалăн производство уйрăмĕсенче электроэнерги парса тăмалли технологие хутшăнман объектсен реестрне хатĕрленĕ. Пĕлтĕр, сăмахран, 19 км ВЛ-0,4 тата 10 кВ линисене, 11 КТПна сӳтнĕ. Çакă та – хушма ĕç, тăкаклă, анчах оборудовани шанчăклă упранать, кирлĕ пулсан ăна часах каялла лартма пулать. Тăвайра çав лини электричество парса тăнă хуçалăх кĕçех тепĕр хут ĕçлесе каясса кĕтнĕ, çавăнпа линие тĕкĕнмен. Анчах «пуçаруллă» çын тупăннă, ăна тăван районти ял хуçалăх производствине çĕнĕ вăй парасси пĕртте пăшăрхантармасть-тĕр.

Ку хутĕнче проводсене темле ĕçкĕçсем е нушаллă çынсем мар, хăйĕн пысăках мар бизнесне тытса пыракан çын куç хывни тĕлĕнтерет. Тепĕр тесен – унăн сиене саплаштарма укçи пурах-тăр. Полици уголовлă ĕç пуçарнисĕр пуçне «Чăвашэнерго» сиене шыраса илме тавăç хатĕрлет. Паллах, виçи пĕчĕк мар. Çĕнĕ проводсем туянасси, вĕсене карасси, транспорт тăкакĕсем – вун-вун пин тенкĕлĕх.

Çакна та каламалла: хапсăнупа çăмăлттайлăх пĕтĕçсен инкек çураласси те часах. Айккинчи çынсем энергообъектсенче суранланнă тĕслĕхсен тĕп пайĕ – шăпах электроэнерги, энергооборудовани вăрлама тăнипе сăлтавланнăскерсем. Республикăра провод касма тăрсан çын вилнĕ е йывăр аманнă тĕслĕхсем манăçман-ха. Телее, юлашки çулсенче Чăваш Енре унашкалли пулман, çапах хăшĕ-пĕрин çăмăлттайлăхĕ сисчĕвлентерет.

Калăпăр, электролини юпине пырса тăрăнтарас тесен транспорт хатĕрĕн рулĕ умĕнче мĕнлерех пуçтах пулмалла?! Çулталăк пуçланнăранпа – çавнашкал 6 тĕслĕх. Тепĕр тесен электричество хăрушлăхĕ тепĕр чух пач кĕтмен çĕрте те пулать. Сăмахран, пулăра. Халĕ анлă усă куракан углепластик вăлтасем тока пăхăр пралук пекех лайăх яраççĕ. Вăлта тăршшĕ 6-7 метра та çитет. Çыран хĕррипе е юхан шыв урлă иртекен электролиние вăлтапа лектересси – ним те мар. Çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче пулăçсене вилĕм кӳнĕ çакнашкал инкек темиçе те пулнă ĕнтĕ.

Упранăр! Электролинисем, трансформатор подстанцийĕсем, электричество щичĕсем пысăк хăрушлăх кӳни пирки ан манăр.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

Вулакан пултарулăхĕ

Эп пулмасан...

Çак çут тĕнчене эп килмен
пулсан,
Çитместчĕ пĕр çын
çĕр çинче.
Йĕр те юлмастчĕ, тухмастчĕ
сассăм,
Пулмастчĕ сăмах та эп çукки
çинчен.

Ача çуратса ӳстермен пулсан,
Ӳсместчĕ çемье тăват çын таран.
Вĕсен ĕçне теприсем тусан та,
Ман ăрава тăсас çук никам та.

Вăрçăччен çуралса ӳсмен пулсан
Çитместчĕ, тен, пĕр салтак
вăрçăра.
Унта ытлашши пĕр çын та
пулман,
Çич çыншăн та тивнĕ хăшне
çапăçма.
Эп хам пурнăçра мĕн кăна
курман...

Пурне ас илĕп ватлăх çитнĕ май.
Кун-çулăм иртнĕ ĕçре ачаран,
Тӳлевсĕр ĕç те тиетчĕç самай.

Калас сăмаха калайман пулсан,
Çырас тенине эп çырман
пулсан –
Ман шухăш çын патне çитместчĕ,
Пуçра мĕн пурри сĕврĕлсе
пĕтетчĕ.

Ĕçне кура çеç çынна чыслатчĕç,
Укçа-тенкĕлле ыр ят сутăнман.
Мана та ят-сумсăр хăварманччĕ:
Награда нумай... Чунпа эп пуян.

Çут çанталăк... Эс ун ачийĕ,
Пултăр вăл саншăн чи çывăх тăван.
Сывлăх та, ытти те пурте пулĕ
Ăна юратса пĕрле пурăнсан.

■ **Ревокат МОИСЕЕВ**

•Чăваш Енре – Культура çулталăкĕ•

Чăваш юрри-ташши – Америкăра

Уявсемпе çыхăннă шавлă, хаваслă кунсем иртсе кайрĕç. Ача-пăча вĕри хĕвел айĕнче хĕртĕнет, ăшă шывра чăмпăлтатать. Аслисен пысăк пайĕ те канура. Ял çыннисен вара питĕ яваплă тапхăр – ĕççи. Культура ĕçченĕсем вĕсене тĕрлĕ майпа пулăшса, хавхалантарса пыраççĕ. Меллĕ кашни самантпа усă курма тăрăшаççĕ: механизаторсем е йĕтем çинче ĕçлекенсем канса илнĕ вăхăтра пĕчĕк концерт кăтартма, тĕнчери лару-тăру пирки калаçса илме май тупаççĕ. Культура çулталăкĕнче пуçарулăха тата та вăйлатма кирлине лайăх ăнланаççĕ вĕсем.

Хуларисем те хăйсен ĕç-хĕлне "пушатса" ярас темеççĕ, каникул тата кану вăхăтне пăхмасăр çĕнĕрен те çĕнĕ ĕçсем пурнăçлаççĕ. Студентсем çамрăксен фестивалĕсемпе конкурсĕсене хутшăнаççĕ, тăван хулана çĕнтерӳпе таврăнаççĕ. Акă Чăваш патшалăх академи юрăпа ташă ансамблĕ çак кунсенче Америкăри Çурçĕр Каролинăра – Пĕтĕм тĕнчери фольклор фестивалĕнче. Эпир пĕлнĕ тăрăх – вăл унта 31-мĕш хут иртет, çак тапхăрта фестивале 100 ытла çĕршывран 200 яхăн коллектив хутшăннă. Культура çулталăкĕнче чăвашсем хăйсен пуян йăли-йĕркипе АПШра пурăнакансене, фольклор уявне хутшăнакан вун-вун халăх представителĕсене паллаштарĕç.

Республикăпа паллаштарать

"Чувашская Республика. Приглашение к сотрудничеству" кĕнекен 14-мĕш кăларăмĕ кун çути курчĕ. Ун пирки пĕр иккĕленмесĕрех ăнăçлă аталанакан регионăн визит карточки теме юрать. Хăйĕн салам сăмахĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çак шухăша палăртнă: "Çирĕм пĕрремĕш ĕмĕрте, тĕнчене ярса илнĕ глобализаци тапхăрĕнче, пирĕн республикăн несĕлсен тĕлĕнмелле хăй евĕрлĕхне, йăла-йĕркисене, ăсхакăлне упраса хăвармаллах. Çапла тусан çеç эпир чун тасалăхне çухатмăпăр. Унсăрăн этемĕн пуласлăх çук. Килсе çӳрĕр пирĕн пата... Чăваш Ен – уçă регион".

Кăларăма ЧР Журналистсен союзĕ хатĕрленĕ. Ун ĕçченĕсем Культура çулталăкĕнчи çĕнĕ кĕнекене чунне парса ĕçлени куç умĕнчех. Унпа паллашнă хыççăн пĕр иккĕленмесĕрех " тăван хутлăх историйĕпе паллаштаракан учебник " теме пулать.

"Чăваш Республикин хулисемпе районĕсем" пай пысăк вырăн йышăнать. Унта кашни пирки тĕплĕн чарăнса тăнă, вĕсен экономика, инвестици ĕçĕ-хĕлĕ пирки каласа кăтартнă.

Кĕнекере тăван тавралăх кун-çулĕ, йăлийĕрки, ӳнер промысли тата паллă çынсен шăпи çырăннă. Кунтах – ЧР патшалăх влаç органĕсен, музейсен, театрсен тата ыттисен телефонĕсем те.

Ял ăстисем

Канаш районĕнчи Шăхасан ял тăрăхĕнчи библиотекăпа культура аталанăвĕн центрĕнче темиçе çул ĕнтĕ хĕрарăмсен "Хозяюшка" клубĕ ĕçлет. Унта тĕрлĕ çулти çынсем çӳреççĕ. Вĕсен хушшинче çекĕллĕ йĕппе çыхакансем те пур: М.Боголюбова, Л.Николаева, Э.Куропаткина, В.Михайлова тата ыттисем.

Культура çулталăкĕнче центр методисчĕ, "Хозяюшка" клуб ертӳçи И.Петрова "Ылтăн алăсем – ылтăн ĕçсем", "Ял ăстисем" куравсем йĕркеленĕ.

Ял тăрăхĕнчи ал ĕç ăстисем ытти курава та хастар хутшăнаççĕ. Сăмахран, Л.Николаева "Регионсем – чикĕсĕр хутшăну", Э.Куропаткина, В.Михайлова, Г.Фадеева "Ял кĕввисем" выставкăсенче палăрнă. З.Александровăпа Р.Васильева Республика кунĕнче Комсомольски салинче хăйсен ĕçĕсене кăтартнă.

Çак кунсенче центрта çĕнĕ курав, "Пирĕн ăстасем" ятлăскер, ççăлнă. Унта тĕрĕ тĕрлес, çыхас тата çĕлес енĕпе пурнăçланă ĕçсем вырăн тупнă. Вĕсен хуçисем – маларах асăннă çынсемех.

Вулавăшра кичем мар

Комсомольски районĕнчи Элпуç ял тăрăхĕнчи вулавăш – ачасен юратнă вырăнĕсенчен пĕри. Библиотека ĕçченĕсем çуллахи каникул вăхăтĕнчи вулав валли ятарлă çулĕксем хатĕрленĕ, вĕсене ытти чухнехинчен капăртарах тума тăрăшнă, канура усăллă литература вырнаçтарнă.

Ачасен черчен чунĕ илем патне туртăннине лайăх ăнланаççĕ Элпуçсем, çавăнпа хăйсен ĕçĕнче иллюстрацисемпе пуян кăларăмсемпе анлăн усă кураççĕ.

Куславккари «симĕс» чарăну

Куславккапа паллашас шухăшлă туристсен шучĕ çулленех ӳссе пырать. Культура çулталăкĕнче хăнасен йышĕ тата та пысăкрах пултăр тесе тăрăшаççĕ кунта пурăнакансем. Ку енĕпе тĕрлĕ майпа усă кураççĕ. Сăмахран, "Алексей Толстой" теплоходри туристсем валли "симĕс" чарăну туса панă. Хусан тата Самар çыннисем Атăл хĕрринчи пляжра хĕвĕл айĕнче хĕртĕннĕ, хула çывăхĕнчи паркра уçăлса çӳренĕ, Н.Лобачевский музейĕпе, авалхи зодчество палăкĕсемпе, паянхи хулапа паллашнă.

Кивĕ Арланкассинче – ачасен ансамблĕ

Çак кунсенче Елчĕк районĕнчи Кивĕ Арланкасси ялĕн кунĕ иртнĕ. Ял çыннисене уявпа саламлама район центрĕнчен ачасен "Мандаринки" ансамблĕ пынă. Кĕçĕн çулти артистсем юрлас тата ташлас енĕпе палăрнă. Сăмахран, ушкăнри чи çамрăк Татьяна Арефьева "Мама" юрă шăрантарнă, Елена Пыркина вара инди ташшипе палăрнă. Ансамбль ĕртӳçи Марина Кузьмина та аяккинче пăхса тăман, "Ромашка" юрăпа савăнтарнă.

Ял çыннисем шăпăрлансене ăшшăн тав тунă. Уяв йĕркелӳçисенчен пĕри – Марина Александрова – ачасене ял çумĕнчи кӳлĕ хĕррине экскурсие илсе кайнă.

Надежда СМИРНОВА хатĕрленĕ.

•Чăваш Енре – Культура çулталăкĕ•

Валерий Комиссаров: «Вĕренӳ кĕнекисем ырă туйăм парнелеççĕ»

Педагогсен шухăшĕпе – вĕренӳ процесĕнче учебниксен пĕлтерĕшĕ çав тери пысăк. Çавăнпа та вĕсене вĕрентекенĕн ĕçĕнчи хушма пай пек çеç пăхни тĕрĕсех мар. Хальхи вăхăтра шкул учебникĕсем пысăк информациллĕ кĕнекесем шутланаççĕ. Вĕсенче практика занятийĕсене ирттермелли кăтарту, теори материалĕ чылай. Тĕплĕ шухăшласа йĕркеленĕ, кăсăклантарма пултаракан вĕренӳ кĕнекисем ачана ку е вăл предметпа пĕлӳ ытларах илме май параççĕ.

Ахальтен мар Чăваш кĕнеке издательствин ĕçĕ-хĕлĕнче вĕренӳ кĕнекисемпе пособийĕсене пичетлесси тĕп ĕçсенчен пĕри. Вĕсене издательство Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерствин планĕпе килĕшӳллĕн хатĕрлесе кăларать.

Кĕнеке авторĕсемпе редакторсен пĕрлехи тухăçлă ĕçĕ çинчен Чăваш кĕнеке издательствин директорĕ Валерий Комиссаров каласа кăтартать.

– Çулсерен Чăваш кĕнеке издательстви çĕнĕ вĕренӳ çулĕ валли вун-вун учебникпа вĕренӳ пособийĕ пичетлесе кăларать. Тĕпрен илсен вĕсем – республикăри тата республика тулашĕнчи шкулсем валли хатĕрленĕ чăваш чĕлхи учебникĕсемпе ĕç тетрачĕсем, тăван ен историйĕпе тата культурипе хатĕрленĕ вĕренӳ пособийĕсем, тĕрлĕ словарь. Республикăри хула шкулĕсем валли чăваш чĕлхипе альтернативлă учебниксем тухса тăраççĕ. Вĕрентекенсем хăш учебникпе ĕçлессине хăйсем суйласа илеççĕ.

Кăçал республикăри тата унăн тулашĕнчи шкул ачисем валли 30 ытла вĕренӳ кĕнеки пичетленсе тухĕ. Вĕсене çĕнĕ вĕренӳ стандартĕсемпе, хальхи программăсемпе килĕшӳллĕн хатĕрленĕ. Пирĕн авторсем – паян тухăçлă ĕçлесе пыракан учительсем, методистсем, ăслăлăх кандидачĕсемпе профессорсем. Вĕсем вĕрентӳ ĕçĕнче нумай çул тăрăшса пысăк опыт пухнă профессионалсем.

Акă, тĕслĕхрен, Леонид Павлович Сергеев – филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор, Чăваш Республикин наукăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Раççей Федерацийĕн професси аслă пĕлĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ. Вăл çырнă вĕренӳ кĕнекисемпе тата пособийĕсемпе шкулсенче вун-вун çул вĕренеççĕ.

Шкулсем валли кĕнеке кăларас енĕпе педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕ, И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн доценчĕ Тамара Васильевна Артемьева 20 çул ытла тăрăшать. Чăваш шкулĕсенчи кĕçĕн классем валли хатĕрленĕ «Литература вулавĕ», «Чăваш букварĕ» учебниксен авторĕ вăл. Пултарулла тепĕр автор – Елена Енькка. Вăл – 4, 5, 6-7, 8 классем валли хатĕрленĕ «Тăван ен историйĕпе культури» вĕренӳпе методика комплексĕн авторĕ.

Чăваш кĕнеке издательстви учебниксен комплекчĕсене кăларакан ытти издательствăпа та ĕçлĕ çыхăну йĕркеленĕ. «Просвещение» издательствăпа хăш-пĕр учебнике тата ĕç тетрачĕсене чăвашла куçарса кăларасси пирки килĕшӳ тунă.

Чăваш кĕнеке издательстви ĕç тетрачĕсене, тĕрлĕ словаре, энциклопедисене пичетлесе кăларас ĕçе уйрăмах пысăка хурать. 2012 çулта икĕ томпа «Вырăсла-чăвашла словарь» пичетленсе тухрĕ. Иртнĕ çул Чăваш кĕнеке издательстви Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕпе пĕрле хатĕрленĕ хăйне евĕрлĕ проекта пурнăçа кĕртме пултарчĕ: «Чăваш Республикин археологи картти» кĕнеке кун çути курчĕ. Ку вăл археологи палăкĕсем çинчен пур енлĕн каласа кăтартакан энциклопеди шайĕнчи ăслăлăхпа паллаштару кăларăмĕ. Авторсем кĕнекене паллă ученăй археолога, педагога, общество ĕçченне В.Каховские халаллана.

2013 çулта паллă педагог, тавра пĕлӳçĕ И.Дубанов хатĕрленĕ «Чăваш Енри географи ячĕсем» тавра пĕлӳ словарĕн хушса пуянлатнă иккĕмĕш кăларăмне пичетлерĕмĕр. Хальхи вăхăтра Чăваш Республикин территорийĕнчи географи объекчĕсен ячĕсен системи темиçе ăрăвăн пурнăç тăршшĕнче çирĕпленсе пынă. Ятсен списокĕ улшăнми пулăм мар, яланах мĕн те пулин çĕнни тупăнать е манăça тухать, карттă çинчен çухалать е хăйĕн ятне улăштарать. Тепĕр чухне географин пĕр объекчĕ темиçе ятпа çӳреме пултарать. Кĕнекен çĕнĕ кăларăмне пурĕ виçĕ пин ытла ят кĕнĕ – ял, кӳлĕ, юхан шыв, çырма-çатра, вырăн тата ытти те.

Географи ячĕсем – халăхăн историпе культура пуянлăхĕн пĕлтерĕшлĕ пайĕ. Çавна май вĕсемпе кăсăкланасси, чăн пĕлтерĕшне ăнланса илесси нихăçан та чакмасть. Паян Раççейре топоними ячĕсене тĕпчесси аталанса пырать, тĕрлĕ кĕнеке пичетленет. Пирĕн çĕр-шывăн кашни регионĕ хăйне евĕрлĕ ятсемпе пуян.

Кăçал Л.Сергеев профессорăн «Синонимсемпе антонимсен словарĕ» тата Е.Васильевăн «Чăваш чĕлхинчи синонимсен словарĕ» пичетленсе тухрĕç. Ăна пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулта кĕçĕн классенче вĕренекенсем, аслă шкулти студентсем тата чăваш чĕлхипе кăсăкланакансем валли хатĕрленĕ.

Нумай томлă «Чăваш чĕлхин ăнлантарулла сăмах кĕнекине» кăларассипе те ĕç малалла пырать. Паянхи куна словарĕн икĕ томĕ пичетленнĕ. Ку – пуçласа тунă ĕç. Халĕччен чăваш чĕлхин ăнлантару словарĕсем пулманччĕ-ха.

Словарьте кашни лексика единици пирки тулли информаци пур: семантика тытăмĕ, стилистика пахалăхĕ, пуплевре усă курнин уйрăмлăхĕсем. Сăмахсене тата каларăшсене ăнлантарнă, вĕсене илемлĕ литературăра, хаçат-журналта, фольклорта тата ытти çĕрте усă курнă тĕслĕхсене цитатăласа илсе панă. Çакă сăмахăн пĕлтерĕшне çăмăллăнах асра хăварма май парать. Словаре чăваш чĕлхин лексикинче юлашки вăхăтра пулса иртнĕ улшăнусене шута илсе йĕркеленĕ. Çичĕ томпа тухакан ăнлантару сăмах кĕнекине кулленхи калаçура тата илемлĕ литературăра тăтăшах усă куракан пурĕ 100000 сăмах, сăмах çаврăнăшне, каларăша кĕртме палăртнă.

Çулсеренех пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан учрежденисенче вĕренекенсем валли чăвашла-вырăсла тата вырăсла-чăвашла словарьсем пичетлесе кăларатпăр. Çитес çул чăваш чĕлхин çĕнĕ орфографи словарьне хатĕрлесе кăларма палăртнă.

Издательствăра кĕнеке кăларас ĕçре пиçĕхнĕ ăстасен туслă, пултарулла коллективĕ вăй хурать – редакторсем, корректорсем, техника редакторĕсем, художниксем, дизайнерсем. Вĕсем вĕрентӳпе методика литературин пахалăхĕ пысăк пултăр тесе тăрăшаççĕ. Раççей Федерацийĕн Вĕренӳпе наука министерстви 2009 çулта Чăваш кĕнеке издательствине шкулсем валли учебниксем хатĕрлесе кăларма ирĕк панă издательствăсен шутне кĕртнĕ.

Юратса тата килĕшӳллĕ тунă кĕнеке ырă туйăм çуратать теççĕ. Вăл хăйсен ĕçне юратса, кăсăкланса пурнăçлакансен ырă туйăмĕсене упрать.

■ **А.ВЛАДИМИРОВА**

Спорт

«Ветерансем – маттур!»

Çапла калас килчĕ çĕр-шыв чемпионатĕнчен медальсемпе тавраннă ентешĕмĕрсене. Чăн та, тивĕçлĕ канăва тухнисем тĕрлĕ шайри ăмăртăва хутшăнса пысăк кăтартусемпе палăраççĕ.

Юлашки çулсенче ветерансен спортне аталантарас тĕлĕшпе республикăра чылай ĕç пурнăçларĕç. Акă çĕртме уйăхĕнче Шупашкарта Раççей пенсионерĕсен пĕрремĕш спартакиади иртрĕ. Спартакиадăра Чăваш Ен чысне 8 спортсмен хӳтĕлерĕ. Тĕрлĕ турнирта лайăх кăтартусемпе палăрса пирĕн ентешсем виççĕмĕш вырăн йышăнчĕç.

Çак кунсенче ветерансене Саранск хули çăмăл атлетсен чемпионатне йыхравланă. Чăваш Енĕн пĕрлештернĕ командине Спорт ветеранĕсен республикăри канашĕн председателĕ Василий Шоркин ертсе пынă. Шур сухалсемпе шурапасем чемпионатра 27 медаль çĕнсе илнĕ. Чи сумлă наградăсен хуçи – 73 çулти спринтер Анатолий Фадеев /Шупашкар хули/. Вăл тĕрлĕ дистанцире чупса команда пухмачне виçĕ «ылтăнпа» пуянлатнă. Спорт мелĕпе утакан 41-ри Поликарп Ильинăн та ылтăн икĕ медаль. Тăршшĕне тата çӳллĕшне сиксе Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 1-мĕш спорт шкулĕн вĕрентекенĕ Игорь Свинцов палăрнă. 400 метрлă дистанцире 70 çулти Николай Гаврилова никам та çитеймен: çакнашкал пысăк ăмăртăва пĕрремĕш хут хутшăннăскер 800 метра та иккĕмĕш парăнтарнă. Хĕрарăмсен турнирĕнче Нина Жукова икĕ тупăшура пĕрремĕш тата иккĕмĕш вырăнсене йышăннă.

Çавăн пекех пирĕн атлетсем эстафетăра тĕрлĕ ушкăнра ăмăртса пухмача 4 ылтăн тата 4 бронза медальпе пуянлатнă. Ăмăрту пĕтĕмлетĕвĕпе Чăваш Ен ветеранĕсем улттăмĕш вырăнта.

■ **А.МИХАЙЛОВ**

Студентсем хаваслă канчĕç

Çак кунсенче Чăваш патшалăх университечĕн Çĕрпӳ районĕнчи кану базинче спорт мероприятийĕсем иртрĕç. Ăмăртусене, канăва 80 ытла студент хутшăнчĕ.

Кану базине вĕсем ЧПУ профкомĕ уйăрнă икĕ автобуспа çитрĕç. Хăш-пĕр студент кӳлĕ хĕрринче çут çанталăк илемĕпе киленчĕ, ыттисем футболла, волейболла, дартс выляма пуçтарăнчĕç.

Вăйăсем хыççăн студентсем шыва кĕчĕç, кимĕпе тата катамаранпа ярăнчĕç. Ун хыççăн пурте сĕтел хушшине апат çиме ларчĕç. Апачĕ питĕ тутлă пулчĕ.

Спорт ăмăртăвĕсен çĕнтерӳçисене профком дипломсемпе, парнесемпе чысларĕ.

Савăнăçлă та хаваслă мероприятисем хыççăн студентсем килĕсене саланчĕç.

Денис АФАНАСЬЕВ,
ЧПУ студенчĕ.

Уй куçлă...

Канаш районĕнчи Сител ялĕн каччи хĕллех хыпарсăр çухалнă. Унăн виллине ака уйăхĕн пуçламăшĕнче Малти Тукай ялĕ патĕнчи кĕпер айĕнче тупнă. Следстви комитечĕн тата шалти ĕçсен органĕсен сотрудникĕсем ăнăçлă йĕркеленĕ шырав преступниксене тупса палăртма май панă.

Нарăс уйăхĕнче Шăхасан ялĕнчи лавккара эрех ĕçнĕ май хирĕçсе кайнă та – 18, 24 тата 27 çулсенчи виçĕ çамрăк хайхи йĕкĕте ăна хăйĕн килĕ патĕнче кĕтсе илнĕ. Хĕненĕ, унтан машинăпа улах вырăна илсе кайнă, металл пăрăхпа усă курса каллех хĕненĕ. Каччă сывлами пулнине ăнланса илсен унăн виллине кĕпер айне пытарса хăварнă. Çакăн çинчен никама та шарламăпăр тесе калаçса татăлнă.

Анчах уй куçлă теççĕ вĕт – вăрттăнни халь çиеле тухнă. Уголовлă ĕçе тĕпчеççĕ.

Н.ДМИТРИЕВ.

Хаçат пĕлтерĕшлĕрех-и е массаж-и?..

Шупашкар районĕнчи «Тăван Ен» хаçат ĕçченĕсем пире, штатра тăман корреспондентсене, тĕл пулăва йыхравларĕç. Редакцин Шупашкарта вырнаçнă çĕнĕ кантурĕнче халĕччен пулманскер хапăлласах килĕшрĕм.

Тĕл пулăва райхаçатпа таçантанпах çыхăну тытакан авторсем хутшăнчĕç. Вĕсем: Фадей Константинов, Ксения Михайлова, Валентин Синельников, Николай Смирнов тата ыттисем. Хаçат ĕçченĕсем пире ăшшăн кĕтсе илчĕç, сĕтел тавра ларса калаçма чĕнчĕç. Штатра тăман журналистсем редакци Шупашкара куçни пирки пăшăрханса сăмахларĕç. Райхаçат ĕçченĕсем 1932-2011 çулсенче Кӳкеçрех ĕçленĕ. Кунта район пурнăçне аса илни те вырăнлă. 1936 çулта поселокра культура çуртне çĕкленĕ – пĕрремĕш хутра хаçат çапнă /унччен Шупашкарта пичетленĕ/. Вăрçăччен типографи валли çĕнĕ çурт тума палăртнă, анчах ĕлкĕреймен. 1955 çулта кăна çак шухăш пурнăçа кĕнĕ: çулталăкран пĕр хутлă типографи ĕçлеме пуçланă. Типографи директорĕнче Л.А.Алексеев ĕçленĕ вăхăтра /1962-1997çç./ иккĕмĕш хутне хăпартаççĕ.

Редакцие хулана куçарас ĕç-пуç тĕп редакторта В.Сорокин вăй хунă чухнех пуçланнăччĕ. Вăл тăрăшнипех виçĕ пӳлĕме илсе юлма пултарнă. Ун хыççăн хаçат тилхепине темиçе çын та тытса пычĕ. 2011 çулччен редакци иккĕмĕш хутра вырнаçнă. Паян вара... Хаçат фотографĕ пулнă палăкĕсем çинчен пур енлĕн каласа кăтартакан энциклопеди шайĕнчи ăслăлăхпа паллаштару кăларăмĕ. Авторсем кĕнекене паллă ученăй археолога, педагога, общество ĕçченне В.Каховские халаллана.

2013 çулта паллă педагог, тавра пĕлӳçĕ И.Дубанов хатĕрленĕ «Чăваш Енри географи ячĕсем» тавра пĕлӳ словарĕн хушса пуянлатнă иккĕмĕш кăларăмне пичетлерĕмĕр. Хальхи вăхăтра Чăваш Республикин территорийĕнчи географи объекчĕсен ячĕсен системи темиçе ăрăвăн пурнăç тăршшĕнче çирĕпленсе пынă. Ятсен списокĕ улшăнми пулăм мар, яланах мĕн те пулин çĕнни тупăнать е манăça тухать, карттă çинчен çухалать е хăйĕн ятне улăштарать. Тепĕр чухне географин пĕр объекчĕ темиçе ятпа çӳреме пултарать. Кĕнекен çĕнĕ кăларăмне пурĕ виçĕ пин ытла ят кĕнĕ – ял, кӳлĕ, юхан шыв, çырма-çатра, вырăн тата ытти те.

Географи ячĕсем – халăхăн историпе культура пуянлăхĕн пĕлтерĕшлĕ пайĕ. Çавна май вĕсемпе кăсăкланасси, чăн пĕлтерĕшне ăнланса илесси нихăçан та чакмасть. Паян Раççейре топоними ячĕсене тĕпчесси аталанса пырать, тĕрлĕ кĕнеке пичетленет. Пирĕн çĕр-шывăн кашни регионĕ хăйне евĕрлĕ ятсемпе пуян.

Кăçал Л.Сергеев профессорăн «Синонимсемпе антонимсен словарĕ» тата Е.Васильевăн «Чăваш чĕлхинчи синонимсен словарĕ» пичетленсе тухрĕç. Ăна пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулта кĕçĕн классенче вĕренекенсем, аслă шкулти студентсем тата чăваш чĕлхипе кăсăкланакансем валли хатĕрленĕ.

Нумай томлă «Чăваш чĕлхин ăнлантарулла сăмах кĕнекине» кăларассипе те ĕç малалла пырать. Паянхи куна словарĕн икĕ томĕ пичетленнĕ. Ку – пуçласа тунă ĕç. Халĕччен чăваш чĕлхин ăнлантару словарĕсем пулманччĕ-ха.

Словарьте кашни лексика единици пирки тулли информаци пур: семантика тытăмĕ, стилистика пахалăхĕ, пуплевре усă курнин уйрăмлăхĕсем. Сăмахсене тата каларăшсене ăнлантарнă, вĕсене илемлĕ литературăра, хаçат-журналта, фольклорта тата ытти çĕрте усă курнă тĕслĕхсене цитатăласа илсе панă. Çакă сăмахăн пĕлтерĕшне çăмăллăнах асра хăварма май парать. Словаре чăваш чĕлхин лексикинче юлашки вăхăтра пулса иртнĕ улшăнусене шута илсе йĕркеленĕ. Çичĕ томпа тухакан ăнлантару сăмах кĕнекине кулленхи калаçура тата илемлĕ литературăра тăтăшах усă куракан пурĕ 100000 сăмах, сăмах çаврăнăшне, каларăша кĕртме палăртнă.

Çулсеренех пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан учрежденисенче вĕренекенсем валли чăвашла-вырăсла тата вырăсла-чăвашла словарьсем пичетлесе кăларатпăр. Çитес çул чăваш чĕлхин çĕнĕ орфографи словарьне хатĕрлесе кăларма палăртнă.

Издательствăра кĕнеке кăларас ĕçре пиçĕхнĕ ăстасен туслă, пултарулла коллективĕ вăй хурать – редакторсем, корректорсем, техника редакторĕсем, художниксем, дизайнерсем. Вĕсем вĕрентӳпе методика литературин пахалăхĕ пысăк пултăр тесе тăрăшаççĕ. Раççей Федерацийĕн Вĕренӳпе наука министерстви 2009 çулта Чăваш кĕнеке издательствине шкулсем валли учебниксем хатĕрлесе кăларма ирĕк панă издательствăсен шутне кĕртнĕ.

Юратса тата килĕшӳллĕ тунă кĕнеке ырă туйăм çуратать теççĕ. Вăл хăйсен ĕçне юратса, кăсăкланса пурнăçлакансен ырă туйăмĕсене упрать.

■ **А.ВЛАДИМИРОВА**

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
РЕКЛАМА
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш курт, 316-мĕш пӳлĕм
ПĔЛТЕРӲ
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

Администрация Комсомольского района информирует о предоставлении в аренду земельного участка сроком на 49 лет из земель сельскохозяйственного назначения:
- с кадастровым номером 21:13:190704:141, площадью 5538 кв.м., расположенного по адресу: Чувашская Республика, Комсомольский район, Полевосундырское сельское поселение.
Заявки принимаются в течение месяца по адресу: 429140, Чувашская Республика, с.Комсомольское, ул. Заводская, д. 57. Справки по телефону: 8(83539) 51567.

Администрация Большеторханского сельского поселения Вурнарского района планирует предоставить в аренду земельные участки из земель сельскохозяйственного назначения сроком на 49 лет:
1) для ведения сельскохозяйственного производства:
- с кадастровым № 21:09:060101:378 площадью 304000 кв.м., адрес: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Вурнарский, с/пос Большеторханское;
Заявки принимаются в течение месяца. Справки по тел. 6-18-22

ПРОДАЮ

172.Гравмассу, керамблок, песок, щебень. Д-ка. Т. 89023277585.

323.Песок карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

472.Гравий, щебень, песок, гравмассу, торф, перегной, чернозем, асфальтную крошку, опилки. Т.: 8-906-132-63-78, 484161, 89196526902.

518.Гравмассу, щебень, песок речной, карьерный; чернозем, глину. Д-ка. Т. 89520269954.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Аппарачĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Аппарачĕн йĕркелӳ управленийĕн сектор заведующийĕн Станислав Алексеевич Ивановăн амăшĕ – тыл ĕçченĕ, педагогика ĕçĕн ветеранĕ **Мария Петровна ИВАНОВА** вилнĕ пирки тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланнине пĕлтерет.

«Хыпар» хаçатăн çитес номерĕ утă уйăхĕн 26-мĕшĕнче тухать.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрацилĕнĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор А.П.МИХАЙЛОВ

Редакципе издатель адресĕ: 428019, Шупашкар, Иван Яковлев просекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Хыпар".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ: 28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: hypar1@mail.ru hypar@mail.ru
Çăлăм: Ăнăçлă ĕçлĕ çулталăк! Çăлăм: Ăнăçлă ĕçлĕ çулталăк!
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.
Ес кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.
РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ес тата çын", "Самана тапăн", "Компетентлă" рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Номере 23.07.2014 алă пустă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пустă.
Тираж 7411. Заказ 2707.